ХЫПАР

# САМАНТ

ÇĔРТМЕ
6 № 2014



12+

*«Самант» çырăнса илекен –
чăн-чăн вĕрентекен!*

# Пуçламăшĕ

***Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ас тăвăмĕ сĕвĕрĕлсех пырать. Кинофильмсенче, кĕнекесенче нимĕç салтакĕсене илемлĕрех кăтартма тăрăшни те сисĕнет. «Малкай» çынсем совет саманипе, коммунизм идеологийĕпе халĕ те кĕрешнĕрен чылай чух вăрçă-çуйха урăх сĕмлĕн кăтартасси те пур. Тĕнчипе илес пулсассăн вара ют çĕр-шыв çамрăкĕсемшĕн 2-мĕш тĕнче вăрçине пуçласа яракан агрессор – Совет Союзĕ! Яппун çамрăкĕсенчен чылайăшĕ Хиросимăпа Нагасаки çине атом бомбисем пăрахнă çĕр-шыв Пĕрлешӳллĕ Штатсем мар, СССР тесе ĕненеççĕ!***



*Яков Джугашвили*

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи теми Раççейре те пит интереслех мар. «Çĕнтерӳ кунне уявланă – çитет» йĕрке пуç пулса тăра пуçларĕ. Мĕншĕн çапла пыни те ăнланмалла – аслă вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче кăкăр çапса мухтанмалли нимĕн те çук. Хĕрлĕ Çар хăвачĕпе чăнах та вăйлă курăннă, тĕрĕс çапăçма пĕлекен сахал пулнă. Салтаксене урра! кăшкăртса штык аттаккине хăваланипе çĕнтерӳ килмест.

Асăну кунне чысласа аслă вăрçăн пит паллах мар енĕсене аса илни вырăнлă. Совет Союзне тапăнмалли 21-мĕш номерлĕ директивăна – «Барбаросса» плана Германи канцлерĕ А.Гитлер 1940 çулхи раштавăн 18-мĕшĕнче йышăннă. Планпа килĕшӳллĕн – Совет Союзне чи нумайăйи 4 уйăхра аркатса тăкмалла. «Барбароссăна» йышăниччен маларах, 1940 çулхи юпа уйăхĕн вĕçĕнчех, Гитлер СССР тӳпинче сăнав-тĕпчев вĕçевĕсем ирттерме хушнă. Сывлăш разведки ирттерекен уйрăм ушкăна Теодор Ровель обер-лейтенанта ертсе пыма хушнă. Вырăссем ан асăрхаччăр тесе самолетсен питĕ çӳлтен вĕçмелле пулнă. 1941 çулхи нарăс уйăхĕнчен тытăнса ятарлă ушкăнăн 4 эскадрилйи СССР шалти территорине ӳкерме тытăннă.

Модернизациленĕ «Не-111», «До-215В-2», «Ju-88 В» тата «Ju-86» самолетсем 9-12 çухрăм çӳллĕшĕнче вĕçме пултарнă. Никам та пеме, ярса тытма (перехват) хăтланманран нимĕçсем вĕсене совет территорийĕнче курмаççĕ тесе шутланă. Нимĕç разведчикĕсене курнă паллах, çапса антарма истребительсем те хатĕр тăнă, вĕçеве тухма вара никам та хушу паман. Ровель ушкăнĕ «Çурçĕр», «Центр» тата «Кăнтăр» çар ушкăнĕсем тапăнмалли СССР территорине пĕр чăрмавсăр ӳкерсе пĕтернĕ, вăрçă пуçлансан бомбăламалли объектсене карттă çине палăртса тухнă.

Вăрçă тухнă кун совет авиацийĕ чăнах та парадри пек уççăн ларнă. Аэродромсене тапăннă чух нимĕçсем 2 килограмлă бомбăсене 96-шар штук хунă кассетăсемпе усă курнă. Çурăлсан пĕри кăна 300 яхăн ванчăк салатакан бомба совет самолечĕсене ала пек тыллантă пулин те часах вĕсемпе усă курма чарнă. Бомбăланă чух кассетăри икĕ рет бомбăна сывлăш хумĕ хушăран хирĕнчĕклĕ тунă. Заданирен таврăннă самолет анса ларнă чух хăвăртлăхне чакарсан тин хирĕннĕ çав бомбăсем тухса ӳкнĕ. Кун пек чух бомбардировщикран нимĕн те юлман. Люфтваффе командованийĕ çавăн пекех 10 килограмлă бомбăсемпе те усă курма чарнă. Вĕсем те бомболюксенче хĕсĕнсе ларкаланă, самолет чĕтреннипе вара çавăнтах çурăлнă.



**Рубен Ибаррури**

Çĕртмен 22-мĕшĕнчи историе кĕрсе юлма пултарнă ĕç-пуç – 12 совет бомбардировщикĕ нимĕç колоннине аттаккăлани. Грузовиксен хушшинче Гейнц Гудериан генерал-оберстăн (генерал-полковник) штаб машини те пулнă. Танксен 2-мĕш ушкăнĕн ертӳçине «Хăвăрт Гейнца» ним те тăвайман совет авиацийĕ. Самолетсене пурне те нимĕç истребителĕсем çапса антарнă. Бомбардировщиксене эскадри-эскадрипе хăйсем тĕллĕн, истребительсене сыхлаттармасăрах кăларса яни тăтăшах пулнă совет командованийĕн. «Хăвăрт Гейнцпа» тепĕр пăтăрмах та пулса иртнĕ: вăл ларса пыракан штаб машини – пĕртен пĕр çăмăл автомобиль! – совет салтакĕсен ушкăнĕ умĕнчен иртсе кайнă. Лешсем нимĕç генералне курнă пулсан та – пемен!

Илемлĕ литературăра та, аса илӳсенче те вăрçă пуçламăшĕнче нимĕç авиацийĕ тӳпере хуçаланни пирки тĕплĕн çутатнă. Самолетсем пĕчченех салтаксене хăваласа çӳрени те пулнă! Темĕн пысăкăш парклă совет çар авиацийĕ темиçе кун хушшинчех «вĕçекен лашасемсĕр» юлнă тени тĕрĕсех мар. Нимĕçсем Совет Союзĕн пурĕ 6 пине яхăн çар самолечĕ тесе шутланă, тĕрĕссипе вара анăç чиккисем патĕнче çеç вĕсем 8 пине яхăн пулнă. Хăрушла çухатусене пăхмасăр самолетсен йышĕ пысăк пулнă, вĕсемпе тĕрĕс усă курма пĕлни вара... Совет авиацийĕн вăйсăрлăхĕ командирсен тата летчиксен квалификаци шайне кăтартса парать.

Эскадрăсен командирĕсем çĕнтерӳсем пирки паракан цифрăсем ытла та пысăк пулнăран Герман Геринг рейхсмаршал вĕсене пит ĕненесшĕн пулман. Геринг асăрханса пĕлтернĕ тăрăх – вăрçăн малтанхи эрнинче люфтваффе советсен 4990 самолетне тĕп тунă, нимĕçсен çухатăвĕсем – 179 машина!

Совет летчикĕсенчен чи малтан таран тăвакансенчен пĕри – Д.Кокерев кĕçĕн лейтенант. Истребителĕн борт хĕç-пăшалĕ ĕçлеменрен пилот нимĕçе пырса тăрăнтарнă, таран хыççăн икĕ самолет та персе аннă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче танксен чи пысăк çапăçăвĕ 1943 çулта, Курск пĕккинче, Прохоровка поселокĕ патĕнче пулнине эпир шкул çулĕсенченех пĕлетпĕр. Чăннипе вара танксен чи пысăк çапăçăвĕсем 1941 çулта пулса иртнĕ (Курск пĕккинчи Прохоровка çапăçăвне çитес номерте аса илĕпĕр).

Совет Çарĕнче 1941 çулта танксем вермахтринчен

чылай нумайрах шутланнă – 20 пине яхăнах. Çĕнĕ йышши Т-34 тата КВ-1 танксем те çителĕклех пулнă. Пĕлсе çапăçма пултаракан танкистсем тата командирсем вара...

1941 çулхи çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче Кăнтăр-Анăç фрончĕ ирттернĕ мехкорпуссен хирĕç çапăмĕнче икĕ енчен питĕ нумай танк çапăçнă. Пирĕн 8, 9, 15, 19, 22-мĕш мехкорпуссем тата вермахтăн танксен 11,13,14 тата 16-мĕш дивизийĕсем Броды-Ровно-Луцк тăрăхĕнче тĕл пулнă. Пирĕн 5 мехкорпусра пурĕ 2803 танк шутланнă, нимĕçсен 4 дивизийĕнче – 585. Совет наступленийĕ çĕртмен 26-мĕшĕнче тытăннă. Утă уйăхĕн пуçламăшĕнче вара мехкорпуссем танксемсĕр юлнă. Çак çапăçусенчен чи йĕркеллĕ тухаканни – Андрей Власов генерал. Вăл ертсе пынă 4-мĕш мехкорпус танксен йышне çуррине яхăн – 40 процент – упраса хăварнă (1942 çулта тыткăна лекнĕ Власовăн шăпине вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ). Кăнтăр-Анăç фронтĕнче нимĕç наступленине эрнелĕхе чарса лартнă совет танкисчĕсем.

Курск пĕккинчи çĕнтерӳ вермахтшăн ĕнсе хуçнăн килсе тухнăран Прохоровка поселокĕ патĕнчи танксен çапăçăвне питĕ мухтатпăр – чăн-чăн ĕç-пуç унта мĕнле пулса иртни пирки вара интересленместпĕр те. Пĕр çапăçура 2 пин ытла танк вут-броняпа вăй виçни Курск пĕккинче мар, Анăç фронтĕнче 1941 çулхи утă уйăхĕн 6-9-мĕшĕсенче – 7-мĕш тата 5-мĕш механизациленĕ корпуссем ирттернĕ Лепель хирĕç çапăмĕ вăхăтĕнче пулса иртнĕ. Урăхла çак тытăçăва эпир Сенно патĕнчи çапăçу тесе калатпăр.

Сенно (белорусла Сянно) – Белоруссири пĕчĕк хула, район центрĕ. Витебскран 58 çухрăмра вырнаçнă, Лепель-Орша чукун çул йĕрри çинче ларать. Хальхи вăхăтра хулара 7,6 пине яхăн çын пурăнать.

1941 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕ. Германи генштабĕн пуçлăхĕн Франц Гальдер генерал-полковникăн кун кĕнекинчен: «Анăç Двина тата Днепр умĕнчи вырăс çарĕсене çапса аркатас тĕллеве пĕтĕмĕшле пурнăçланă темелле. Çавăнпа Раççее хирĕç кампание 14 кун хушшинче выляса илтĕмĕр тени ӳстерсе калани мар». Утă уйăхĕн 5-мĕшĕнче Витебск çулĕ çинче нимĕçсен малти ушкăнĕсем хытă хӳтĕленекен совет салтакĕсемпе тĕл пулсан чарăнма тытăннă. Утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче вара ирпе ирех Анăç фрончĕн Павел Курочкин генерал-лейтенант ертсе пыракан 20-мĕш çарăн икĕ мехкорпусĕ хирĕç çапăма хускалнă. 5-мĕш мехкорпусăн Высокое районĕнчен Сенно, Лепель енне 140 çухрăм каймалла, 7-мĕш мехкорпусăн Рудень районĕнчен Бешенковичи, Лепель енне 130 çухрăм тухмалла пулнă. Чи хĕрӳ çапăçу шăпах Сенно хули патĕнче пулса иртнĕ. Кун вĕçленнĕ тĕле пирĕннисем хулана тытса илнĕ. Тепĕр кунхи çапăçура вара Сенно 3 хутчен алăран алла куçнă, каç кӳлĕм каллех совет салтакĕсен аллинче юлнă. Паттăрсем кун каçа нимĕçсен 15 тапăнăвне сирсе ывăтнă. Утăн 8-мĕшĕнче нимĕçсем совет салтакĕсене Сенноран хĕссе кăларнă, лешсем Витебск-Смоленск шоссе тăрăх çар хӳтти йĕркеленĕ. Çакна пăхмасăр совет танкĕсен тепĕр ушкăнĕ Лепель çине çав-çавах тапăнса пынă-ха: 30-40 çухрăм шала кĕрсе кайнă. Нимĕçсем вара совет позицийĕсенчен пăрăнса утăн 9-мĕшĕнче Витебска пырса кĕнĕ: вермахт валли Смоленска çул уçăлнă. Лепель çапăмне ирттерме нуша пĕтнĕрен Курочкин генерал-лейтенант июлĕн 10-мĕшĕнче наступление чарма хушнă. Хупăрланчăка лекнĕ танкĕсене сирпĕтсе ярса совет танкисчĕсем, салтаксем каялла тухма тытăннă. Сенно патĕнчи çапăçу пĕтĕмĕшле 7 талăк пынă.

Хирĕç çапăмра Анăç фрончĕ 800 ытла танк, 5 пине яхăн салтакпа офицера çухатнă. Нимĕçсем те пысăк çухату тӳснĕ. «Çар хатĕр-хĕтĕрĕ, хĕç-пăшал тата машинăсем ытла та нумай, тытса илнĕ трофейран темĕн чухлĕ чылайрах пĕтрĕç. Кунашкал лару-тăрăва чăтма çук, кун пек çĕнтерсе пырсан эпир хамăрăн вилĕме тупатпăр», – çапла çырнă танксен 18-мĕш дивизийĕн командирĕ Неринг генерал-майор.

Сенно патĕнчи çапăçăва хутшăннисенчен чи паллисем – Сталин ывăлĕ Яков Джугашвили тата Испани компартийĕн генеральнăй секретарĕн Долорес Ибаррурин ывăлĕ Рубен Ибаррури лейтенант.

Аслă вăрçа çĕртмен 24-мĕшĕнчен хутшăннă Яков Джугашвили тыткăна лекнине пĕлеççĕ ĕнтĕ «Самант» вулаканĕсем. Утăн 11-мĕшĕнче Витебск йăлтах нимĕçсен аллине куçать. Пирĕн 16, 19, 20-мĕш армисем хупăрланчăка лекеççĕ. 20-мĕш çарăн 7-мĕш мехкорпусĕн танксен 14-мĕш дивизийĕн гаубицăсен 14-мĕш полкĕн артиллерин 6-мĕш батарейин командирĕ Яков Джугашвили аслă лейтенант хамăрăннисем патне тухнă чухне утăн 16-мĕшĕнче тыткăна лекет. Сенно патĕнчи Черногостница çырми çумĕнче утăн 7-мĕшĕнче кĕрленĕ çапăçури паттăрлăхшăн ăна наград пама та тăратнă пулнă.

*Яков Джугашвили 1943 çулхи ака уйăхĕн 14-мĕшĕнче Заксенхаузен концлагерĕнче вилнĕ (электричество янă йĕплĕ пралук çине сикнĕ хыççăн ăна СС роттенфюрерĕ Конрад Хафрих персе вĕлернĕ).*

Пĕрремĕш кунах вăрçă вутне кĕнĕ Рубен Ибаррури тĕлĕнмелле хăюлăхпа палăрса тăнă. Пĕрремĕш çапăçурах Березина урлă хывнă кĕпере тытса тăнă чухне паттăрлăх кăтартнăшăн (кĕпер патне нимĕçсене 6 сехет яман, кайран гранатăсемпе нимĕç танкĕсене аттакăланă) лейтенанта Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

*Рубен Ибаррури 1942 çулхи çурла уйăхĕн 24-мĕшĕнче Котлубань станцийĕ патĕнчи çапăçура йывăр аманнă хыççăн авăнăн 4-мĕшĕнче Атăл леш енчи госпитальте вилнĕ. 1956 çулхи çурлан 22-мĕшĕнче ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.*

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине асăннă май Кăнтăр-Анăç фронтĕнчи 8-мĕш мехкорпусра пулса иртнĕ ĕç-пуçа аса илмесĕр май çук. Хăйне евĕрлĕ те курăмлă сăнарлать вăл 1941-1945 çулсене. Мехкорпус хирĕç çапăмĕнче Жеган замполитăн КВ-1 танкĕ нимĕçсен танкне таранлать. Совет машинин моторĕ ĕçлеме чарăнать. Тăшман флангра пĕччен юлнă совет танкне буксирлама шут тытать. Нимĕçсен Т-4 танкĕ пырса КВна троспа çыхать те сĕтĕрме пуçлать. Хускалнăран совет танкĕн моторĕ ĕçлесе каять. Устинов механик-водитель танк рычагĕсене ярса илет. КВ вара нимĕç машинине хăйне сĕтĕрме тытăнать. Тăшман экипажĕ сиксе тухса тарать, нимĕç танкне вара совет танкĕ хамăрăннисем патне сĕтĕрсе çитерет.

Аслă вăрçă та çакнашкал сĕмпех иртнĕ темелле. Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн пуç хунă паттăрсене ĕмĕр-ĕмĕр сăвап!



КВ-2

# Турра шан, анчах хӑв та ахаль ан лар

***Паянхи шкул ачисене аслисем кӑштах ӑмсанаҫҫӗ те пуль. Ара, уйрамах хастаррисене, пултаруллисене, вӗренӳре тата спортра ҫитӗнӳ тӑвакансене патшалӑх укҫан пулӑшу парса хавхалантарать-ҫке. Пирӗн республикӑра та ҫулсеренех пиншер ҫамрӑк ЧР Пуҫлӑхӗн стипендине тивӗҫет. Вӗсене кура вара ыттисен те лайӑхрах вӗренес, конкурс-олимпиадӑра, ӑмӑртура тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнас туртӑм ҫуралать. Ҫавӑн пек маттурсенчен пӗри – Семен Морозов.***



Ача ӑслӑ пулни пӗлӳ ҫуртне сукмак такӑрлатма пуҫличченех сисӗнет ҫав. Вӑл нумай пӗлме ӑнтӑлать, аслисене ыйту парса халтан ярать. Ара, сут тӗнчепе паллашсах ҫитейменскершӗн кӑсӑкли чылай тӗл пулать-ҫке. Шкула кайиччченех ҫырма-вулама вӗреннӗ Семен. Кайран пӗлӳ ҫуртне ҫӳреме пуҫласан Люда аппӑшӗ унран пӗрре ҫапла ыйтнӑ: «Ну, класра санран лайӑх вулакан пур-и вара?» Арҫын ача пӗр самант шухӑша путнӑ та: «Пур, Галина Петровна манран лайӑхрах вулать», – тенӗ пӗр пытармасӑр.

Семен кӑҫал Елчӗк районӗнчи Кӗҫӗн Таяпа шкулӗнче тӑххӑрмӗш класа ӑнӑҫлӑ вӗҫлерӗ. Дневникӗнчи вӗренӳ ҫулне пӗтӗмлетмелли страницӑра «пиллӗксем» шӑкӑрин «йӑл кулса» ҫеҫ лараҫҫӗ, маттур ачана тӑрӑшулӑхӗшӗн тата ҫирӗп ӑс-тӑнӗшӗн савӑнтарас тенӗн курӑнаҫҫӗ.

– Вӗренӳ ҫулӗн юлашки уйӑхӗ чи йывӑрри пулчӗ: «Зарница» вӑййисене те, экзаменсене те, ытти ӑмӑртӑва та хатӗрленмелле. Ҫапах ҫак тапхӑр та иртсе кайрӗ, – тет арҫын ача. Вӑл йывӑрлӑха парӑнма хӑнӑхман. Ҫавӑнпа ҫӑмӑл пурнӑҫ шыракансене те ӑнланма пултараймасть. Ҫуллахи каникулта вара Семен «Орленок» лагерьте канас шухӑшлӑ. Темӗнле пулсан та вӑхӑта асра юлмаллах ирттересшӗн вӑл. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне вара Елчӗк шкулӗнче кӗтсе илме ӗмӗтленет, унта 10-11 класра туллин ӑс пухасшӑн.



Тӗрлӗрен конкурсра, ӑмӑртура ҫӗнтерни, конференцисенче тухса калаҫни ахаль иртмен, паллах. Семен ыттисемпе ӑмӑртнӑ вӑхӑтра хӑйӗн ҫитменлӗхӗсене те асӑрхать, вӗсене пӗтерме тӑрӑшать. Ҫапла ҫав, ҫитӗнӳ тӑвас тесен хӑвна мухтанине кӑна итлесе лармалла мар, асӑрхаттарусене те шута илмелле. Ҫавӑн пек маттурсене вара ӑнӑҫу хӑех шыраса тупать тейӗн.

Семен спорта ытларах парӑннӑ. Шашка-шахмат вылямалла тесен ӑна ҫитекен ҫук. Районта ытти шкулсенчен килнӗ тантӑшӗсем ӑмӑртӑва пуҫтарӑнсан Семен Морозов хутшӑнасса пӗлнипех тӑр-тӑр чӗтреме пуҫлаҫҫӗ ӗнтӗ. Ара, ӑна ҫӗнтерме йывӑртарах. Ӑслӑ шухӑшлавлӑ арҫын ача шашкӑпа тата шахматпа районта икӗ хутчен чемпион пулса тӑнӑ.

Вӑл шашка-шахматра кӑна мар, кире пуканӗ ҫӗклессипе те, армспортра та, ҫуран тата йӗлтӗрпе чупассипе те ӑста. Пулас хӳтӗлевҫӗн вӑйлӑ та хӑватлӑ пулмаллине ӑнланать. Ҫавӑнпа кӗлеткине пиҫӗхтерме тӑрӑшать. Тепӗр тесен, спортпа туслӑ пулни арҫын ачан пурнӑҫне кӑсӑклӑх кӗртет, сут тӗнчене хаваслӑрах курма май парать, кӑмӑлне ҫирӗплетет, пурнӑҫа юратма хистет.

– Физкультура вӗрентекен Михаил Петрович Скворцов маншӑн тӗслӗх вырӑнӗнче. Вӑл питӗ тӑрӑшуллӑ, ачасене юрататъ. ЧР Пуҫлӑхӗн стипендине тивӗҫнӗшӗн эпӗ шӑпах ӑна тата аттеаннене тав тӑватӑп, – тет Семен.

«Кашни ҫыннӑн кун-ҫулӗ епле килсе тухассине турӑ хӑех палӑртса хунӑ», – тенине ӗненет вӑл. Камӑн кулянмалли ытларах, камӑн – ҫакна пӗтӗмпех чӑтса ирттермелле. Турри пӗтӗмпех этемӗн кӑмӑл ҫирӗплӗхне кура валеҫет.

– Анчах ҫыннӑн хӑйӗн те тӑрӑшмалла. Тата мӗнле калаҫҫӗ-ха? Турра шан, ҫапах хӑв та ахаль ан лар, – акӑ еплерех ӑслӑ калаҫать вӑл. Хӑшӗ-пӗри юмӑҫсене турӑран та ытла ӗненсе ҫылӑха кӗрет. Семен вара ун пеккисене пачах та хӑлхана чикмест.

Ашшӗ-амӑшӗ ӑна мӗн пӗчӗкрен ырӑлӑха вӗрентет, ҫӗр-шывшӑн усӑллӑ ҫын пулса ҫитӗнессе шанать.

– Атте-анне маншӑн тӑрӑшни аван. Ҫапах пурнӑҫ ҫулне хамӑнах суйламалла, – тет инженер пулма ӗмӗтленекенскер. – Хуть те мӗнле професси илсен те, чи малтан, ҫын пулмалла пирӗн. Ыттисене пулӑшмалла, хамӑрӑн та аталанса пымалла, ҫак тӗнчене чӑннипех те лайӑхлатма ӗмӗтленмелле.

Тӗнчери тӑнӑҫлӑхшӑн ҫунакан ача политикӑпа кӑсӑклансах каймасть пулин те вӑрҫӑ пуҫлакансене хурлать. Унӑн ҫӗр ҫинчи кашни ҫынна телейлӗ курас килетҫке. Ҫӗр-шыв, тӗнче пуласлӑхӗ вара – ҫамрӑксенче. Ҫакна ҫирӗп туйса тӑракан Семен Морозов хӑй умне лартнӑ пархатарлӑ тӗллевӗсене пурнӑҫласса шанас килет.

**Лариса ПЕТРОВА**

# Пĕр çемьери пек пурăнса...

***Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан ятарлă (коррекци) интернат шкулта пултаруллă ача сахал мар. Пĕрисем спортра, теприсем тĕрлĕ ĕçре, виççĕмĕшĕсем вĕренӳре хастар. Паянхи кун ачасем каникулта. Вĕсем халĕ тăван тăрăхĕнче канаççĕ.***




## КУКАМАЙ ПИТĔНЧЕ ЯЛАНАХ ЙĂЛ КУЛĂ ÇИÇТĔР

Саккăрмĕш класс вĕренсе пĕтерне Денис Тихонов Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршăран. Вĕренӳре çитĕнӳсем тунăшăн вăл ЧР Пуçлăхĕн стипендиачĕ пулса тăнă.

– Кукамая, Галина Николаевна Деомидована, манăн пĕрре те кулянтарас килмест, çавăнпа хама пур енчен те лайăххипе кăна кăтартма тăрăшатăп. Вĕренӳре «5» паллăпа кăна ĕлкĕрсе пыратăп, спортпа та туслă. Хамăн çитĕнӳсем пирки кукамая яланах шăнкăравласа пĕлтеретĕп. Хĕпĕртет вара. Эпĕ унăн ывăлĕ вырăнĕнчех çав. Вăл мана ултă тултарсанах хăй хӳттине илнĕ. Пасара япаласем илме пĕрле çӳреттĕмĕр, халĕ ытларах Сергей куккапа çула тухатпăр, – терĕ арçын ача.

Хаваслă каникула питĕ ăнăçлă ирттересшĕн вăл. Килте пулăшнисĕр пуçне тусĕсемпе футболла вылять. Пулла çӳреме те ӳркенмест.

– Çĕр-шыва юрăхлă çын пуласчĕ манăн. Пĕрремĕш ĕç укçинчен кукамай валли чаплă парне туянăп. Савăнтăр эпĕ ура çине тăнă ятпа. Ах, мăнукăм тинех ӳссе çитĕнчĕ тесе калатăр, – тет Денис хăпартланса.

## ХАМА ХӲТТЕ ИЛНИСЕНЕ ТАВ!

Шупашкар районĕнчи Хосантай ялĕнчи Марина Андреева амăшне тĕлĕкри пек çеç ас тăвать.

– Куçĕ пĕлĕт пек кăвакчĕ. Урăх, урăх нимĕн те калама пултараймастăп ун пирки. Юрать мана аннен аппăшĕ тата унăн мăшăрĕ – Роза Георгиевнăпа Юрий Миронович Сапожниковсем хăйсен хӳттине илнĕ. Унсăрăн мана пурнăçра йывăр пулатчĕ.

Вăй çитнĕ, пултарнă таран яланах пулăшма тăрăшатăп вĕсене. Ах, Роза аппа пĕçернĕ апата мĕнле юрататăп тата! Хам та ун пекех янтăлама тăрăшатăп. Çуркуннесерен помидор, хăяр, пăрăç калчисем çитĕнтернĕ вăхăтра та пĕрле эпир унпа. Халĕ те пахчара тăрмашатпăр,– тет хĕр ача шухăша кайса.

Пур çĕрте те хастарлăхпа палăрнă хĕр ача кăçал тăххăрмĕш класс вĕренсе пĕтерчĕ. Çĕвĕçĕ пулас тесе ĕмĕтленет.

– Интернатра аванччĕ. Пĕр çемьери пек килĕштерсе пурăнаттăмăр. Педагогĕсем те ырă кăмăллăччĕ. Чăваш чĕлхине юратнăранах çак предмет урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтеттĕм. Чăваш чĕлхи эрнинче чи хастарриччĕ эпĕ. Юратнă педагог Ольга Ивановна Никифорова хавхалантарса пулăшса пыратчĕ. Вăл тăрăшнипе çитĕнӳсем тăваттăм. Спектакльсенче тĕрлĕ сăнар калăплама та юрататтăм, ун пек чухне хама чăн-чăн артистка пекех туяттăм. Ара, куракан тăвăллăн алă çупатчĕ эпĕ сцена çине тухсан. Апла пулсан килĕшетчĕ манăн роль вĕсене, – тет Марина.



Класс ертӳçи Ольга Ивановна та шухăшлă. Мĕн тăвăн, унăн юратнă вĕренекенĕсем интернатран тухса каяççĕ.

– Роза аппăшĕпе Юрий йыснăшĕ Маринăна, чăн та, питĕ юратаççĕ. Хĕр ача мĕнле вĕренет-ха тесе килсех çӳретчĕç. Унăн пурнăçĕпе кăсăкланатчĕç. Лайăх воспитани панă ăна вĕсем. Çавăншăн савăнатăп. Пирĕн Марина малашне те хăй пултарулăхĕпе ыттисене савăнтарасса, эпир, педагогсем, шансах тăратпăр, – тет класс ертӳçи Ольга Ивановна.

**Луиза ВАСИЛЬЕВА**



*Кристина Сильвестрова юсманпа сăйлать*

# ÇУЛЛАХИ МИКУЛА

## МИКУЛ ТУРĂ ТАТА НИКОЛАЙ ЧУДОТВОРЕЦ

Кăçал «Самант» тусĕсем (хăйсем пĕлмесĕрех) çăва тухнине, çулла чăнласах пуçланнине календарьпе килĕшӳллĕн мар, сĕм авалхи йĕркепе, çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ çитиччен уявларĕç. Нумай халăх паллă тăвакан çак ĕлĕкхи уява тахçанах христианлăхпа çыхăнтарнă. Пирĕн măн асаттесемпе măн асаннесемех ăна Çуллахи Микула тенĕ. Христианлăх çак куна – çу уйăхĕн 22-мĕшне – Çветтуй Николайăн çĕрмен ӳтне Бари хулине илсе пынипе, Хĕллехи Микулана вара – раштавăн 19-мĕшне – Асамçă Микула вилĕмĕпе çыхăнтарать.

Çут çанталăк евĕрлĕхне кура Çуллахи Микулана Раççейĕн вăтам тăрăхĕн кунĕ темелле: кăнтăрта – Италири Апули тăрăхĕнчи Бари хулинче çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче çуллана тин кĕтсе илнин усси çукрах.

Раштавăн 19-мĕшĕнче паллă тăвакан Хĕллехи Микула раштавăн 21-22-мĕшĕнче çуралакан çĕнĕ хĕвелпе çыхăннă пулсан, Çуллахи вара çут çанталăк чăнласах çăва тухнине пĕлтерет, малашне хĕвелĕн чи хĕрӳ тапхăрĕ тытăннине шута илет. Тепĕр уйăхран – çĕртмен 20-21-мĕшĕсенче хĕвел тăрăмĕ. Чи вăрăм кунсем, чи вăрăм хĕвел ури. Çуллахи Микулан мĕлки хĕвел тăрăмĕн тепĕр енĕнче те тĕкĕрленет. Эпир ăна Çуллахи Казански тетпĕр – утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче паллă тăватпăр. Çакна та палăртар: Çуллахи Казански тĕкĕрĕ – Кĕрхи Казански, аслă ăратительски. Чăваш йăли-йĕркипе – Аслă Чӳк кунĕ, кайнисене-вулăрисене чӳк туса асăнни.

Ырă Микул турă чăваш культуринче тарăн тымар янă. Çветтуй Николай халăхра маларах чысланă турă таврашне ылмаштарни паллă ĕнтĕ. Çӳлти Турă (Çӳлти Атте) вырăнне Микул турă теме тытăннă чăвашсем. Çветтуй Николай вырăс халăхĕн управçи те шутланать. Вăл авалхи славянсен Род – пĕлĕт, аçа-çиçĕм, тулăхлăх туррипе тӳр килет (народ, Родина сăмахсем те унăн ячĕпе çыхăннă). Чăвашсем те Микула вăхăтĕнче тăван-пĕлĕшпе тĕл пулнă. Микул турă, Никола Чудотворец ятпа авалхи турăсем сĕмленнинчен ним тĕлĕнмелли те çук: 2 пин çул каялла тĕнчере христианлăх пулманнине çеç шута илмелле.

Çуллахи Микула этем пурнăçĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ çулталăк вăхăтне асăнать. Çу мĕнле пулнинчен малашнехи пурнăç мĕнле килесси пĕр вĕçрен çыхăннă. Микулара ырлăх-сывлăх, ăнăçу-телей, тыр-пул, выльăх-чĕрлĕх ăнтарма ыйтнă. Çавăнпа ĕнтĕ çумăр çума кĕл туни те питĕ пĕлтерĕшлĕ шутланнă.

## КĂМПАЛ ЯЛĔ, ÇУ УЙĂХĔН 21-МĔШĔ

Çуллахи Микулана тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕрен тунă чăвашсем. Пĕр тăвансем тĕп киле пуçтарăнса асăнса ĕçсе-çиесси чи анлă сарăлнă йăла. Кăк ялтан уйрăлса тухнă ялсем тĕп вырăна килсе халăхпа пĕрле асăнса шӳрпе пĕçерни паян кунччен тĕл пулать. Шупашкар районĕнчи Тосинкасси – «Химпром» çăтса янă ялсенчен пĕри. Апла пулин те унта пурăннă çынсем те, çав ялтан тухнă урăх ялсем те тĕп вырăна манмаççĕ. Çуллахи Микулана ирттерме Кăкшăм çырми хĕррине пухăнаççĕ, шӳрпе пĕçереççĕ.

Микулана ял-йышпа паллă тăвас питĕ хитре йăла Вăрнар районĕнчи Кăмпалта упранса юлнă. «Хыпар» корреспонденчĕ Роза Власова, Владимир Архипов водитель тата эпĕ праçнике çав яла пырсан Нина Николаевна Козлова патĕнче чарăнтăмăр. Питĕ тарават кил хуçин тусĕ – Руфина Архиповна Лукина та кунтах иккен. Вĕсем иккĕшĕ те уяв чӳкĕ ирттерекен ушкăнтан – Микул арăмĕсем!

Праçник умĕн, çу уйăхĕн 18-19 мĕшĕсенче, кашни килтен вутă, çăнăх, кĕрпе, çу, çăмарта, сахăр, тăвар, хăмла пуçтараççĕ. Хăмла вырăнне тулă ырши е салат (солод) пама юрать. Çуллахи Микула ирттерме кашни çулах черетпе 5 кил яваплă – пăтă пĕçерекенсем теççĕ вĕсене. Ялта 110 кил, вĕсенчен 30 ытла пушă лараççĕ. Пăтă пĕçермелли черет вăтамран 10-12 çултан çаврăнса çитет.

Юр-вар пуçтарнă хыççăн тепĕр кунне яваплисем сăра вĕретеççĕ. Ăна пĕтĕм ял валли пĕçереççĕ, çавăнпа вăл хăватсăр, пылак – ачасене те ĕçтерме юрать: усă сăра. Микулан курам-техĕмĕ – юсман. Ăна вара питĕ нумай – хутаçĕ-хутаçĕпех пĕçереççĕ: кашни çынна çитмелле, тепĕр кунне ирпе те валеçмелле. Юсман вăл – пĕчĕк пылак пашалу. Кăмпалсем Микула юсманне саврашкалла пĕçереççĕ (ытти çĕрте икерчĕ е салма пек пĕçерни те тĕл пулать)

Праçник сăйларне сăрапа юсмансăр пуçне çӳхӳ (капăртма), пĕчĕк кукăльсем, чӳк пăтти кĕреççĕ. Пĕр кунта пĕçерсе пĕтерме май çукран, вĕсене темиçе кун хатĕрлеççĕ, пăттине вара асăнас умĕн çеç хуранпа çакаççĕ. Кăçал черет çитнĕ 5 кил-йышра – Сильвестровсен, Петровсен, Владимировсен, Макаровсен тата Гордеевсен – пурĕ 9 çын. Уяв ирттерекенсене яланах тăван-пĕтенĕ пырса пулăшать: ĕçĕ нумай – ĕлкĕрмелле! Виçĕ кун пĕçереççĕ Микулшăн яваплисем уяв апат-çимĕçне. Мешехе улшăнăвĕсем те пур. Сăмахран, пĕр 20 çул каялла кăна-ха уяв валли кăмака хутса ятарласа ыраш çăкăрĕ хывнă, халĕ лавккарипех çырлахаççĕ. Пăтă пĕçерекенсемех çынсене ларма саксем хатĕрлеççĕ (кăçалхи Микула валли Кăмпалсем ятарласа çĕнĕ саксем, сĕтел тунă). Унччен юр-вара, хатĕр-хĕтĕре лашапа илсе пынă пулсан, халĕ ытларах машинăпа е мотоблокпа туртараççĕ.

## ÇУЛЛА ÇАПЛА ПУÇЛАНАТЬ!

Чăваш тĕнчинче çулла майăн 21-мĕшĕнче, хĕвел каç енне сулăнсан, 6 сехет иртсен тытăнать. Çакăн чух уяв пуçлакансем сĕтел хушшине лараççĕ. Сĕтеле Кăмпалсем яланах пĕр тĕлте – Микул вырăнĕнче, Луиза Григорьевна Ефимова килĕ умĕнче пуçтараççĕ. Халĕ çак вырăн ял варринчех темелле, авал вара – çуртсем çук чухне – сăвапла çăл патĕнчи кас вĕçĕ те çыран хĕрри пулнă кунта. Уяв ирттерме яваплисем килĕсенчен сăра, апат-çимĕç илсе анаççĕ. Юр-вара яланах Микул арчипе тултарса пыраççĕ, чӳк пăттине – хуранпа. Пăттине ĕнтĕ мĕнле кĕрпе панă – çавсене пурне те ярса пĕçереççĕ. Çăрса пĕтернĕ темĕскер тесе ан шутлăр çак юр-вара. Кăçал пĕçернĕ ассортие тутанса пăхрăмăр та тĕлĕнсе кайрăмăр: хăйне евĕрлĕ тутă, кăмăллă çимĕç. Ахальтен мар Кăмпалсем: «Микул пăтти пек тутлă пăтă çук!» – теççĕ.

Чӳк тăвакансем сĕтел хушшинче ларнă вăхăтра кĕтӳ те ячĕ. Выльăх пăхсан, ĕне сусан уява халăх пуçтарăнма тытăнать. Кашниех укçа та хурать: ыран Ишеке кайса Микул турра пуç çапмалла, шыва пиллемелле, çурта лартмалла.

Микула – Çуллахи те, Хĕллехи те – яланах тăван-пĕлĕшпе тĕл пулмалли уяв пулнă. Кăмпалта Çуллахи Микула ял кунĕ шутланнă. Ют ялсем хăнана йышлăн çӳренĕ. «Ĕлĕк çынсем ярмăркăна пухăннă пекех килнĕ тет. Эпир ас тăвасса та урам тулли мăн çын та ача-пăчаччĕ», – аса илеççĕ Нина Николаевнăпа Руфина Архиповна. Хĕрарăмсем Кăмпалта çуралса ӳсмен, кунта качча килнĕ. Чухлатăр пулĕ ĕнтĕ авал Кăмпалта Микул мĕнлерех кĕрленĕ?

Уяв пуçламăшĕн евĕрлĕхĕ – малтанласа çын пит пухăнманнинче. Микул сĕтелĕ хушшине праçникшĕн яваплисем, чӳк тăвакан ушкăн – Микул арăмĕсем – малтан лараççĕ. Ура çине тăрса турра асăнса хĕрес хывса кĕл тăваççĕ: Микул турра çынсене пăхса тăма, ырлăхсывлăх яма, чир-чĕртен, вут-кăвартан сыхлама ыйтаççĕ. Вара сăра ĕçсе чӳк пăттине ас тиveççĕ. Хальлĕхе сĕтел хушшине ларманнисене те алтăрпа сăра ĕçтереççĕ, юсманпа, çӳхӳпе тата кукăльпе сăйлаççĕ.

Сĕтел хушшинчен тухнисем, сăйланнисем урамра вырнаçса ларса калаçу çăмхине сӳтеççĕ, васкаканни вара килне уттарать. Ачасем урам вăййисене выляççĕ. Ача-пăча мĕн чухлĕ нумайрах – çавăн чухлĕ лайăхрах. Микул вырăнне çынсем хутаç йăтсах пыраççĕ, пăтă пĕçерекенсем кашнине юсман парса яраççĕ.

Карта çине ятарлă хутаç çакнă – пыракансем унта им-çам чиксе хăвараççĕ. Им-çам тесе килтен чĕркесе тухнă чĕптĕм çӳп-çапа калаççĕ: пӳртри тата витери тусан, кив укçа, хăмла, темиçе пĕрчĕ тырă. Йăла пĕлтерĕшне ăнланмалла ĕнтĕ: ӳтпе те чунпа та тасалмалла, килтен те, ялтан та усал-тĕселе, чир-чĕре хăваламалла. Мункун умĕн пӳрт çунă чух таса мар ăпăр-тапăра çурхи шывпа юхтарса янă пекех ĕнтĕ. Йăла-йĕрке никĕсне чухлакан тавçăрса илчĕ пуль: ялĕпе пуçтарнă им-çама вăхăчĕ çитсен шывпа юхтарса ямалла.

## ÇĂЛ ЧӲКĔ

Уявăн ытарĕ Микул арăмĕсем авалхи сăваплă вырăнсенче чӳк тунинче. Çак ушкăна арçынсен те хутшăнма юрать, чару çук. Йăлаланнă тăрăх, Кăмпалта чӳк ирттерекенсем Микул арăмĕсем. Уявра вĕсемпе çӳренĕ май хам та Микул çынни пулса тăтăм. Уяв сĕтелĕ патĕнче пуçтарăнса ларнă ял-йыш асăнни-кĕл тунин кăсăклăхне пит туймасть те темелле. Чӳк тăвакан ушкăнрисем вара кашни çаврăмрах çĕнĕ анлăша та урăх вăхăта лекнĕн туяççĕ хăйсене. Кашни чӳк умĕн Микул сĕтелĕ патне таврăнмалла, юр-вар тата сăра илмелле. Çакăн чухне уяв вырăнĕ мĕнле улшăннине курса тĕлĕнетĕн, Кăмпал ялĕн вăхăт тăрăх тĕкĕрленнĕ кусуйĕсенче (отражение) пулса курнăнах туятăн. Малтанхи чӳке кайнă чух çын çукпа пĕрех, тепре пыратăн Микул вырăнне – урам тулли халăх, каллех таврăнатăн – каç кӳлĕмленнĕ, урăх çынсем лараççĕ, ачасем килĕсене саланнă, юлашки чӳкрен каç пулсан таврăнатăн – сĕм çĕрле, Микул вырăнне электричество хунарĕсем çутатаççĕ, сĕтел патăнче йыш сахал. Вăхăт юхăмĕнчен тепĕр вăхăта çӳренĕ пекех туйăнать.

Малтанхи чӳк – Çăл чӳкĕ. Сăваплă çăл патне Микул вырăнĕнчен хирĕç ларакан çурт картишĕнчен тухса пахча витĕр лапа антăмăр. Нимĕнле шăрăхра та типмен çăл тухать кунта. Пахча вĕçĕнче тăратпăр пулин те авалхи киремет патне чӳк тума анни тӳрех куçа курăнать. Сăра, юсман, кукăльсăр пуçне Çăл чӳкĕнче чĕр çăмарта параççĕ. Ытти асăнура вара чĕр çăмарта çук. Кашни чӳк çурта çунса пĕтиччен пырать.

## УЛА ЮПА (УША ЮПИ) ЧӲКĔ

Тепĕр сăвап – Ула юпа чӳкĕ. Ялтан тухакан аслă çул укăлчи умĕнче ларнă уша юпи вăл. Халĕ ĕнтĕ ял тăрăхĕ улшăннă – аслă çул урăххи, асфальт сарни. Калининона («Нурăс пасарне») урăх çулпа çӳреççĕ Кăмпалсем. Унччен вара инçе çула каякансене ăсатнă чух кунта чарăнса ĕçсе-çинĕ. Салтак ачисене те кунта пил панă ваттисем. Ĕмĕрлĕхех куçне хупнисемпе те ял-йыш урамсен пуçĕнчи юпа патĕнче сыв пуллашнă. Çул çинчисене сыхлаканĕ пулнă Ула юпа. Ял укăлчин суси-сывлăшĕ кунта пурăннă.

Пĕчĕк вăрман-утрав ăшĕнче ларнă Ула юпа. Кăçал вара йывăççисене каснă вырăн сăнĕ улшăннă. Ял урамĕсем вара унăн авалхи шал тытăмне тахçанах улăштарнă. Çапах та вăл киремет-сыхча пулни халĕ те туйăнать.



Микул арчи



Çăл чӳкĕ



Микул вырăнĕ



Ула юпа



*Учӳк*



*Хирлеп хӗрринчен таврӑнсан*

## УЧӲК

Кӑмпалсем ҫак чӳке «Омшаник вырӑнне кайни» теҫҫӗ. Тӗрӗссипе вара, учӳк тӗлне кайрӑмӑр эпир. Хирлеп юхан шывне кӗрекен ҫырма ҫыранӗнче вырнаҫнӑ вӑл. Паянхи кун хӑйӗн тур-сӑвап тытӑмӗн пӗлтерӗшне ҫухатнӑ та Омшаник ятпа тӑрса юлнӑ. Учӳк мешехин кӑсӑклӑ енӗсем пур. Чӳк кӗллинче пурнӑҫ ырлӑхӗсем ыйтнипе пӗрлех Микул арӑмӗсем туй юрри евӗрлӗ юрӑ юрлаҫҫӗ:

Пичи лайӑх курак пур,<br>
Инки лайӑх чӗкеҫ пур.<br>
Куракпала чӗкеҫе<br>
Пӗрлештерсе ятӑмӑр!

Кӗлӗ юрри тыр-пул тата пахча ҫимӗҫ тухӑҫне, килти выльӑх-чӗрлӗх ӗрчесех тӑтӑр тенине кӑна шута илмест – арҫынпа хӗрарӑм хутшӑнӑвӗсем ҫинчен те сӑмах пырать. Ҫу пархатарӗпе пурнӑҫ тулӑх килсен этем йышӗ те ӳсет. Хӗрарӑмпа арҫын пӗр-пӗрин патне туртӑнмасӑр пурнӑҫ сӳнет – ҫакна та аса илтерет учӳк юрри. Сӗм авал ҫак уявра учӳк кӗллинче савӑшу йӑли те пулнӑ пулмалла: мӗншӗн тесен учӳк юррине юрласан хӗрарӑмсем ташлаҫҫӗ, выртса йӑваланаҫҫӗ.

Авалтарах, йӑлапа килӗшӳллӗн, выртса юрласа-ташлакансем, выртса йӑваланакансем вӑй питти хӗрарӑмсем пулнӑ. Тӗрлӗ ҫӗрте темиҫе чӳк ирттерни те ҫак мешехене авал ҫамрӑк хӗрарӑмсем ирттернине ҫирӗплетет: ял тӑрӑх та хӗррипе пӑлан кӗтӗвӗ пек ыткӑнса ҫӳремелле! Халӗ вӑхӑчӗ ҫавнашкал: ҫамрӑксем йӑла-йӗркене хутшӑнасшӑн мар, курса кӑна тӑрасшӑн. Нимӗн те тӑвайман, ҫулланнӑ хӗрарӑмсем тухаҫҫӗ чӳк тума.

Ҫу ырлӑхӗ ҫиттӗр тесе кӗл тунӑ чухне савӑшу йӑла-йӗркене вӑйлатакан, ҫут ҫанталӑк пӗтӗҫӗвне ҫирӗплетекен мешехе пулнах ӗнтӗ. Авал христианлӑх моралӗ пулман, ӗҫ-пуҫ ҫине аналогиллӗн – евӗрлӗн пӑхнӑ. Ҫавӑнпа каҫ пулттипе, анӑҫра хӗвел ури, тухӑҫра ҫӑлтӑрсем палӑрнӑ чух кӗлленӗ учӳк сӑвапне. Савӑшу тӗшмӗртӗвне тепӗр йӑлана камсем тата мӗнле ирттерни те ҫирӗплетет.

### ҪИЧӖ ТИНӖС ЛЕШ ЕННЕ

Омшаник патӗнчен – учӳк кӗллинчен – таврӑнсан Микул сӗтелӗ тавра ҫын сахал юлнӑ ӗнтӗ: ҫӗрле. Тепӗр мешехене арҫынсем ирттереҫҫӗ. Пӗр хутаҫа пуҫтарнӑ им-ҫама ҫур ҫӗр ҫитеспе Хирлеп шывӗпе юхтарса ямалла. Ятарласа ӑсталанӑ кимӗ хуйхӑ-суйхӑна, чир-чӗре ҫичӗ тинӗс леш енне, этем тӗнчи вӗҫленнӗ тӑрӑха илсе каять. Ку мешехене хӗрарӑмсем хутшӑнмаҫҫӗ. Чӑннипе, хӗрарӑмсемшӗн те чару ҫук, хушӑран вӗсем те каяҫҫӗ им-ҫам карапне инҫе ҫула ӑсатма.

Чӑнкӑ ҫыранран анса яраҫҫӗ кимме, каялла вара ҫаврӑнса пӑхмасӑр чупмалла. Паллӑ ӗнтӗ, ватӑ хӗрарӑмсем ку йӑлана хутшӑнман. Мешехе тытӑмне тимлесен, ҫӗрлехи ҫыран хӗрринче тем те пулма пултарнӑ. Ун чухне кӑмӑл-сипет чылай чух сут ҫанталӑк йӗркине пӑхнӑ.

Эпир, чӳксем вӗҫлесе килнӗскерсем, Микул сӗтелӗ хушшинче ларатпӑр. Йӑла тӑрӑх, кимӗ ярса ҫур ҫӗр тӗлне таврӑнмалла каялла. Вӑхӑт пур-ха. Пуҫтарӑннисем, мешехене хутшӑнакансем калаҫса, ӑна-кӑна аса илсе сӑмах ҫиппи сӳтеҫҫӗ. Праҫник кульминацийӗн саманчӗ ҫитрӗ.

Микул вырӑнӗнчен урампа тухӑҫ енне тухрӑмӑр: Хирлеп анӑҫран тухӑҫа юхать. Тӑван республикӑра – тӗлӗнмелле! – юхан шывсем чӑваш тӗнчин саккунӗсене пӑхӑннӑнах тухӑҫалла юхаҫҫӗ. Хирлеп (тепӗр ячӗ Кӗҫӗн Тӑрла) ҫырмине пӗчӗк ҫырма тееймӗн, шывӗ хӑвӑрт, кӑпӑклансах юхать. Кимӗ ямалли вырӑна хирпе утрӑмӑр. Ӑнланмалла ӗнтӗ: авал ял чикки шутланнӑ тӗле каятпӑр, ял-йыш тӗнчин хӗрри ку.

Хальхинче, им-ҫам юхтарса янӑ чух, сӑра ӗҫмеҫҫӗ, юсман-кукӑль активмеҫҫӗ. Ҫуртине вара кимӗ ҫине ҫутса лартаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫичӗ тинӗс леш енне каякан карапӑн мачта та пур – ҫурта валли. Ҫыранран шыв патне антӑмӑр. Им-ҫам хутаҫҫине хунӑ кимӗ ҫине ҫурта ҫутса лартрӗҫ те пӗчӗк карап Хирлеп шывӗпе ҫичӗ тинӗс леш енне кайма тухрӗ. Кимӗ юхнӑ май ҫутса лартнӑ ҫурта ҫулӑмӗ астраллӑ ишевре им-ҫампа панӑ таса марлӑха ҫунтарса ярать. Ҫичӗ тинӗс леш енне вутра ҫунса тасалнӑ кимӗ пулса ҫитет пирӗн пӗчӗк те харсӑр карап. Им-ҫам та урӑх тытӑма куҫать: хурса янӑ укҫа, тырӑ пулас тухӑҫа ҫаврӑнаҫҫӗ, пӳрт тата вите тусанӗ вара хура тулӑх тӑпра пулса тӑрать!

Кимме шывпа ярсанах пӗри: «Тытать! Тарӑр!» – тесе кӑшкӑрать те мешехе ирттерекенсем ҫаврӑнса пӑхмасӑр, сӑмах чӗнмесӗр ялалла чупаҫҫӗ. Микула вырӑнне ҫитсе сӗтел хушшине ларсан вара тин чӳк ҫимӗҫне активеҫҫӗ.

Ҫуллахи Микула кунӗнче, майӑн 22-мӗшӗнче, уяв малалла тӑсӑлать. Пӑтӑ пӗҫерекенсем ирпе, кӗтӳ хӑваличченех, Микул вырӑнне килеҫҫӗ, пӑтӑ ӑшӑтаҫҫӗ. Иртсе каякансене пӑтӑ ҫитереҫҫӗ, юсман парса яраҫҫӗ. Юлнӑ юр-вара пӑтӑ-юсман пӗҫернӗ 5 кил-ҫемьене пӗр пек валеҫсе параҫҫӗ. Саксене те сӳтсе илсе каяҫҫӗ.

Ирпе Микул арӑмӗсем ҫӑл патне чӳк тума анаҫҫӗ. Ҫӑл куҫ шывӗ нихӑҫан та ан типтӗр тесе каллех чӗрӗ ҫӑмартапа асӑнаҫҫӗ. Кӗл тунӑ хыҫҫӑн пӑтӑ пӗҫерекенсенчен виҫҫӗшӗ Ишек чиркӗвне Микул турра пуҫ ҫапма каять. «Кӑҫал ҫулла ҫумӑр ҫусах тӑтӑр, этеме ҫанталӑк енчен патӑр!» – тесе вӗсем Ишек ҫӑлӗнчен шыв ӑсса кӗлле кӗреҫҫӗ, уявра пуҫтарнӑ укҫана Ишек чиркӗвӗнче хӑвараҫҫӗ. Пачӑшкӑ Кӑмпалсем ӑсса кӗнӗ шыва ҫветит туса ярать. Ишек шывне яла илсе килсен чӳк туса ҫӳренӗ Микул арӑмӗсем кӑна мар, кӑмӑл тӑвакансем пурте ҫав шыва пырса ӗҫеҫҫӗ.

Ҫава кӗтсе илнӗ уяв иртсен ҫанталӑк ҫумӑр ҫутармарӗ пулсан, Микул арӑмӗсем ҫумӑр чӳкӗ ирттерме тухаҫҫӗ.



*Им-ҫам кимми*

***«Иртнипе малашлӑх чиккинче» проект ЧР Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви пулӑшнипе пурнӑҫланать.***

**Владимир СТЕПАНОВ**

# Бал



***Вĕренӳ çулĕ вĕçленес умĕн Калининăри вăтам шкулта Çуллахи бал ирттересси йăлара. 15 çул ĕнтĕ çак ырă та савăк курăмлă мешехене. Бал ташшисемпе савăнтаракансем унччен 9-мĕш тата 11-мĕш классенчен вĕренсе тухакансем çеç пулнă пулсан, пĕлтĕртенпе йĕрке улшăнчĕ: йыш хушăнчĕ. 4-мĕш класран вĕренсе тухакансем – кĕçĕн пусăмпа уйрăлакансем те ташлаççĕ халĕ халăх умĕнче. Шкулти чи илемлĕ уявсенчен пĕринче çунат сарма – Çуллахи бала хутшăнма – тата 5 çул кĕтме чăнах та йывăр вĕсене. Шкул директорĕ Татьяна Павловна, чунпа çамрăкскер, ташлакан шкул йĕркелес шухăша пурнăçа кĕртекенсенчен пĕри, шăпăрлансен кăмălне тивĕçтернĕ: бал ташшисенче кĕçĕнни-асли çук.***





«Ташлакан шкул» проектăн евĕрлĕхĕ те пур: физкультура предмечĕпе уйăрнă 3 сехетрен пĕринче ачасем ташă тĕнчине каяççĕ. Хусканусен илемне туйма хăнăхтараканĕ – Надежда Тикинева. Пултаруллă, ӳркенмен, хастар хĕрарăм, технологи дисциплинине ертсе пыраканскер, фитнес тата хореографи курсĕсенче вĕреннĕ, халĕ ачасене ташă чĕлхин вăрттăнлăхĕсене уçса парать.

– Йăлана пуçарса кăна янă чух ачасен ташлас кăмăлĕ уçах марччĕ. Тарса пытанакансем те пурччĕ. Халĕ вара пурте хаваспах ташлаççĕ. Шупашкарти бал каçĕсене пурте мĕнле каясшăн, чи тивĕçлисене суйласа илетпĕр. Уява шкул тумтирĕпех тухма калатпăр пулин те ашшĕ-амăшĕ, бал тата чаплăрах та илемлĕрех пултăр тесе, хĕр-упраçа селĕм кĕпе тăхăнтартать. Енчен те хăш-пĕр пикесен тусĕсем шкултан вĕренсе тухса кайнă пулсан, вĕсем лешсене ятарласа чĕнсе илеççĕ. Çамрăксем ташланине курма ачисем вĕренсе тухса кайнисем те çӳреççĕ. Чи хитре ташлакан мăшăрсем вара юлашки шăнкăрав кунхине куçа савăнтараççĕ. Çуркуннене тухсанах ял-йыш: «Бал хăçан ирттеретĕр?» – тесе ыйтма тытăнать, – каласа парать Ирина Ефимова, директор çумĕ.

Илемпе киленме кăна мар, ăна хаклама та пĕлмелле. Мĕнле сăмах татса пĕтереççĕ тулькkăш жюри членĕсем – пурте пултаруллă чух чи лайăххисене палăртса пăх-ха! Кăçалхи Çуллахи балра çĕнтернисен списокне те кăтартар – ятран пĕлччĕр «Самант» тусĕсем хăйсен чунташĕсене. Вĕсем – Анна Федорова, Алексей Константинов, Кристина Алексеева, Эдуард Константинов, пĕр тăван Еленăпа Дмитрий Константиновсем, Татьяна Андреева, Василий Романов, Людмила Капитонова, Николай Лукин, Дина Павлова, Мария Захарова, Александр Воробьев, Индира Снитина, Федор Афанасьев, Надежда Блинова, Ирина Ефимова, Александр Ананьев.

Калинино шкулĕ курăмлă, хавхаланулла кăрал мешехе те пуçарса ячĕ. «Плац-концерт» ятлă вăл. Хамăрла каласан – шкул парачĕ, çартуйĕ. Ăна нарăсăн 23-мĕшĕнче тата çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче, ял варринче ирттереççĕ. Нурăссем çар воспитанийĕпе яланах малта, кунта кадетсен, моряксен, пограничниксен, космонавтсен класĕсем пур. Калинино хастарĕсем Раççей ăмăртăвĕсенче те мала тухса палăрнă. Шкул – воспитани енĕсене аталантарас тĕлĕшпе ĕçлекен ана. Çартуйне малтан, тĕрĕслесе пăхмалла, пĕр класс çеç ирттернĕ. Кăçал Çĕнтерӳ кунне паллă тунă чухне вара ултă класс хутшăннă: 100 ытла ача! Плац-концерт евĕрлĕхĕ – çартуй каччи-хĕрĕ урам лапамĕнче тĕрлĕ маршпа тĕрлĕ еннелле пĕр харăс утнинче. Питĕ хитре те тулли курăмлă марш. Плац-концерт курма Нурăс халăхĕ Мускаври Хĕрлĕ лапама тухнă пекех пуçтарăнать, юнашар ялсенчен те килеççĕ кунта. Çартуйĕн черчен пайĕ – Шупашкарта ирттерекен «Хĕллехи юмах» бал каçне хутшăннă мăшăрсем ташă ăсталăхне кăтартни.

**Олеся ВОИ**

# Вăрманта вырăнĕ çитет пулĕ те-ха...

***Чăвашсем пĕрле пухăнсан, ăс-тăнпа кăшт хĕрсен, чунпа хĕмленсен «Алран кайми аки-сухи» халăх юррине куççуль кăларса юрламалла тата Петĕр Хусанкайăн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăввине йĕре-йĕре каламалла. Унсăрăн чун канмасть. Алран кайми аки-сухи мĕнне пĕлместпĕр ĕнтĕ, хăш-пĕр ялта лаша кӳлме пĕлекен çын та юлман пулин те – пур пĕр юрлатпăр. Вара:***

***Пĕр вăрман пулсан этемлĕх,***
***Тĕрлĕ йывăç пур унта.***
***Ярăнса кăна ӳсмелĕх***
***Вырăн çитĕ вăрманта, – тесе те – чăвашсен чăмăртанмалла тесе хăлаçланатпăр, те Çӳлти Аттене чышкăпа юнатпăр.***

Шухăшласа пăхар-ха Çĕр чăмăрĕн вăрманĕнче ӳсекен чăваш йывăççи çинчен. Мĕнлерех-ши вăл пăхма? Шалт та палт ан тĕлĕнĕр: чухлама та тĕшмĕртме пулать çакна! Чăваш культурин хăй евĕрлĕхĕсене шыракан-тĕпчекен «этношухăшлавçăсене» аса илер те модельлеме тытăнар.

Чăвашсене культурăра чи хăратаканни – çĕнĕлĕх. «Кăна ăнланмаççĕ! Ку – ăнланмалла мар!» – тесе çирĕплетсе калани хăнăхнă сăмах çеç мар, чăвашлăхăн аталану саккунĕ: эпир пуç хĕрлĕ кутăнла ӳсекен халăх.

Халĕ вара йĕри-тавралла тимлĕн пăхса çаврăнăр. Нью-Йоркри пек урам тулли машина, кашни çын çыхăну хатĕрĕсемпе Америка шпионĕнчен кая мар хĕçпăшалланнă. Чăваш культурин мăчавăрĕсене ĕненсе лартас пулсан вара – тăван культура XIX-XX ĕмĕрсенчи электричество çеç мар, краççын лампи мĕнне пĕлмен ялта çеç аталанаять. Çак шухăша йышăнсан, паянхипе танлаштарсан – чăваш ятлă этем республикăра тахçанах çухалмалла, улăх-вăрман вырăнне пуш хир сарăлса выртмалла. Пурнăç тени вара шутсăр ăслă чăваш шухăшлавçисене нимĕн вырăнне те хумасть, цивилизаци малалла ыткăннăçемĕн ыткăнать, этемлĕх аталанăвĕн хĕрри те курăнмасть.

Ăслă пулнăран хăйсене ыттисем ăнланмасран хăракан чăвашсем вара ăçта каяççĕ? Ниçта та. Тăван культура, тăван чĕлхе майпен хупăнса пырать – çакă çеç. Чĕлхе усă кураслăхне анлăлатасчĕ тес вырăнне чăвашла ансат калаçасчĕ-çырасчĕ тени пуç пулса тăрать. Урăхла каласан – эпир ухмахсен чĕлхине ятарласа калăплатпăр. Пурнăç аталанăвĕнче вырăс чĕлхишĕн ним кăткăсси те çук, пурте ăнланмалла пулсан, чăвашла вара иккĕ çумне иккĕ хушсан миçе пулнине те çырса кăтартма юрамасть: вулакансем ăнланмасса пултараççĕ.

Камсем вĕсем чăвашла вулакансем? Вырăссем-и? Акăлчансем-и? Мĕн пулса тухать? Ачасем шкулта вырăс чĕлхипе темле предмет та вĕренеççĕ, наука литературине вырăсла вулама пултараççĕ – пурте пурне те ăнланаççĕ. Чăвашла çырсан вара – никам та нимĕн те ăнланмасть.

Çавăнпа ĕнтĕ, хаклă тăвансем, чăваш чĕлхи аталанăвĕпе, проблемисемпе çыхăннă наука ĕçĕсене чăваш чĕлхеçисем вырăсла çыраççĕ! Чăваш чĕлхи ыйтăвĕсене вырăс чĕлхипе çеç ăнланмалла каласа-çырса пама пулать! Аталану çак шая çитнĕ.

Çапла вара – «примитивлăх» ăнлавăн синонимĕ «чăвашлăх» тени пулса тухать. Халĕ ĕнтĕ чăваш йывăççи патне таврăнма вăхăт.

Çĕр чăмăрĕн вăрманĕнчи чăваш культури йывăçĕ те ансатран ансат пулмалла. Унăн ниепле те ытти йывăçран çӳле кайма юрамасть: «ыттисем ăнланмасса пултараççĕ». Хăватлă халăхсемпе тан ӳсни те чăваш сăпайлăхне палăртмасть – апла унăн йывăççен айĕнче ӳсмелле: «пурте ăнланччăр». Чăвашлăх йывăççин сăн-сăпачĕ – пĕчĕк те имшеркке тĕм, йывăç шайне ларманскер. Çавăнпа чăваш халăхне ĕмĕрсен юхăмне парăнтарнă сĕм юман вăрманĕпе танлаштараймăн. Хăтланса пăхăр-ха: чĕлхе çаврăнать-и? Акă чĕлхене те, ăс-тăна та, ӳт-пĕве те шалкăм çапса пăрахать те чăваш этемми чĕр виле пулса та тăрать.

Уйрăм паттăрсене çеç, халăх картĕнчен тухса кайнисене, каялла вырăнне лартма май çуккисене, юман пек тесе ырласа илеççĕ. Хисеплĕ пĕр-пĕр чăваша чăн-чăн юманпа танлаштарса чыс тăваççĕ пулсан – тӳрех пĕлĕр, ăна чăваш ретĕнчен кăларса пăрахаççĕ. Стандарт чăваш мăнаçлă йывăç пек пулма пултараймасть. Çум курăк чухлĕ ӳссен те – турра шĕкĕр. Эталонлă, юман пек çынсем – урăх халăхсен ывăлхĕрĕ.



Чăвашлăх йывăçĕ ятлă вăрманай тĕммин вулли те питĕ интереслĕ: пĕр туратсăр вăл. Мĕншĕн тесен этнос йывăçĕн кашни турачĕ – çĕнĕлĕх, урăх шухăш. Мĕн чухлĕ турат ытларах – çавăн чухлĕ çулçă нумайрах. Мĕн чухлĕ çулçă нумайрах, йывăçça çавăн чухлĕ хĕвел çути хăвачĕ ытларах пырать.

Ăнланатпăр: ортодокс чăвашлăха нумай турат-çулçă кирлĕ мар – çĕнĕлĕхрен хăрать вăл. Чăваш культурипурнăçĕнче стандарт пĕр-икĕ шухăш – апат çимелли те вилсе пĕтес мар тесе ача тăвасси çеç пулмалла – тата мĕн кирлĕ? Атту пурнăç ытла кăткăсланать, чăвашсене çут тĕнче ăнланми пулать. Мĕн патне пырса тухатпăр ун пек чух?

Малаллине хăвăр шухăшлăр...

**Менгу ТИМУР**

# Авӑнсассӑн та хуҫӑлас марччӗ!



***«Виҫ хӗрарӑм – пӗр пасар», – теҫҫӗ халӑхра. Тем тесессӗн те, арҫынсемех шухӑшласа кӑларнӑ ҫакна. Этемлӗхӗн черченкӗ ҫурри пӗчӗк йышӗ пӗр ҫӗре пуҫтарӑнсассӑнах пӗр-пӗринчен хӑпма пӗлмесӗр калаҫать, такама та сӳтсе явать имӗш. Сӑмах пине ҫитет, вӗсем вара ҫаплах уйӑрӑлаймаҫҫӗ иккен. Паллах, кунта тӗрӗслӗхӗ те ҫук мар-тӑр. Ҫапах арҫынсене те пырса тивет ку каларӑш. Эсир вӗсем тӗл пулсассӑн еплерех пакӑлтатнине курнӑ-и? Ҫитменнине, шапа пек ахӑраҫҫӗ. Сӑмахпа кама кӑна тӗксе илмеҫҫӗ пуль. Ҫакӑн хыҫҫӑн тата хӗрсене тиркеме пӑхаҫҫӗ-ха йӗкӗтсем.***

Юрӗ-ҫке, сӑмахӑм урӑххи пирки, апла пулин те ҫӳлерех асӑннӑ тӗслӗхпе тӳрременӗнех ҫыхӑннӑ. Пӗлӗшӗме тахҫанах пӗр шухӑш аптӑрататать – хӗрсен е каччӑсен йышӗ лайӑхрах? Хӑшне мухтамалла, хӑшне хурламалла? Тӳрех ним калама аптӑрарӑм-ха. Тантӑшсенчен те, аслӑрах ӳсӗмрисенчен те: «Хӗрарӑмсем хушшинче кӑна ӗҫлеме Турӑ ан пӳртӗрех. Питӗ йывӑр ун пек чухне. Пӗри теприне ӑмсанать, кураймасть, ура хума тӑрӑшать», – тенине илтнӗ-ха ӗнтӗ. Питӗ тӗлӗнтеретчӗ мана кунашкал шухӑшлав, ниепле те пуҫа вырнаҫаймастчӗ. Чӑваш хӑй курмасӑр ӗненмест тет вӗт-ха. Ку тӗлӗшрен эпӗ чӑн чӑвашах пулас.

Курманнин курас, курнин тарас килет тет. Шӑпа алли мана та хӗрарӑмсен йышне ертсе ҫитерчӗ. Тӳрех асӑрхаттармалла, мана кунта ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илмерӗҫ. Урайне те хӗрлӗ кавир сарманччӗ. Эп кун пеккине кӗтмен-ха та, ҫапах ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑнсан авантарахчӗ. «Юрӗ-ҫке, тен, пуҫлӑх ҫывӑрса тӑранман. Урамри шӑрӑх та тарӑхтарать-тӗр мӑнтарӑна. Ертӳҫӗ пулма та ҫӑмӑл мар, чылай кӑткӑс ыйтӑва пӗччене татса пама тивет, йӑлт тӗрӗслемелле», – лӑплантарма тӑрӑшрӑм хама. Ахалех ҫунат хушнӑ-мӗн эпӗ.

Ҫӗнӗ вырӑнти ҫӗнӗ йӗркесене ытти ӗҫтешсемпе паллашсан ӑнкара пуҫларӑм. Пирвайхи кунах аслӑрах та ӑслӑрах ӗҫтешӗм: «Пирӗн патра тар тӑкас тесен хытӑ чунлӑ пулма сунатӑп. Пур сӑмаха та хӑлхуна ан чик», – терӗ. «Ай-уй!» – теме ҫеҫ пултартӑм ун чухне. Мӗншӗн ҫапла асӑрхаттарнине те чухласах ҫитерейменрӗм. Мӗн пирки сӑмах пынине темиҫе кунтанах ӑна илтӗм. Пуҫлӑхӑн кӑмӑлӗ кӗрхи ҫанталӑк пек улшӑнать иккен. Ӑна ним туса та юрама ҫук. Пуринчен ытла акӑ мӗн тӗлӗнтерчӗ-ха мана – ӗҫе пурнӑҫланӑ чухне мӗн чухлӗ ытларах тӑрӑшатӑн, мӗн чухлӗ тӗплӗрех тӑватӑн, вӑл ҫавӑн чухлӗ ытларах хурласа тӑкать, тем те каласа хӑртать. Ун пӳлӗмне кӗрсе тухсан пӗтӗм кӑмӑл пӑсӑлать, йӗрес килет. Алӑ лаштӑр! усӑнать.

Юлашкинчен ӗҫе ҫӳрес килми пулчӗ. Юратса суйланӑ профессие курайми пултӑм. Юрать-ха, пӗр ӗҫтешӗм пулӑшса, хавхалантарса та лӑплантарса тӑратчӗ. Ӑна халӗ те тав тӑватӑп ӑшӑмра. Вӑл пулман тӑк тата йывӑртарах лекетчӗ, мӗншӗн тесессӗн ыттисем йӑпӑлтатса калаҫатчӗҫ, йӑл кулатчӗҫ. Хӑйсем вара: «Ку миҫе эрнерен тухса кайӗ-ха?» – тесе елпӗретчӗҫ, чеен йӑхӑлтататчӗҫ. Ҫакна пытарма тӑрӑшсан та туяттӑм вӗсен чӑн кӑмӑлне. Мӗн тӑвас ӗнтӗ, ҫакӑн пек ҫивӗч туйӑмлӑх аннеренех куҫнӑ мана...

Виҫӗ уйӑх майлӑ чӑтрӑм ку тамӑка. Пурнӑҫ савӑклӑхне те туйми пулнӑччӗ вӗт. Ҫакӑнтах тепӗртак тытӑнса тӑнӑ тӑк халсӑр юлнипе, депрессие кӗрсе ӳкнипе сыватмӑшах ҫакланаттӑм. «Айванкка ку!» – теме пултаратӑр. Анчах сире хирӗҫлеме сӑлтавӑм пур. Эпир ҫынсем-ҫке-ха, кашкӑрсем мар! Эппин, мӗншӗн пӗрпӗрне кураймасӑр, такӑнтарса, сив сӑмахпа чӗрине пӑрлантарса кун кунламалла? Пурнӑҫ ахаль те йывӑр. Мӗншӗн ӑна тата та кӑткӑслатмалла? Ҫав ӗҫех шӑкӑлшӑкӑл канашласа, килӗштерсе пурнӑҫлама май пурҫке-ха. Хӑр-хар кӑшкӑрашни, йӗплени халиччен кама пулӑшнӑ?

Ҫӑлӑнӑҫ кӗтмен ҫӗртен те ӑнсӑртран килчӗ. Ҫӗнӗ ҫӗре ӗҫе йыхравласассӑн каллӗ-маллӗ шухӑшламасӑрах килӗшрӗм. Тӗнче хӗрне тарса кайма хатӗрччӗ эпӗ. Кунти йыш пысӑкрахчӗ, хӗрӗсем те, арӗсем те пурччӗ. Асар-писер тӑвӑла аса илтерекен унчченхи лару-тӑрӑва кунтипе танлаштарсассӑн ҫӑтмах пахчине лекнӗн туйӑнчӗ. Тинех хаш! сывласа ятӑм. Майӗпен чуна канӑҫлӑх таврӑнчӗ, чӗре те саккӑрла тапма пӑрахрӗ, тикӗссӗн шаккарӗ.

Пӗтӗмпех аванччӗ. Ҫапах кунта тепӗр сӑнав ирттертӗм. Арҫынсем те куҫ хыҫӗнче ӗҫтешӗсене сӳтсе явма юратаҫҫӗ, час-часах шалу виҫи вӑрҫтарать. Теприн кӗсйине кӗрсе нухратне шутлама ӑста-мӗн арсем.

Ҫамрӑк-ха эпӗ, тен, пурнӑҫа ӑнлансах та ҫитерейместӗп. Ҫапах хама валли хӑш-пӗр пӗтӗмлетӗве тума ӗлкӗртӗм: арсен е хӗрарӑмсен йышӗнче вӑй хунинчен килмест ӗҫри ҫитӗнӳпе ӑнӑҫу. Чи пӗлтерӗшли – ҫумра ырӑ кӑмӑллӑ та вашават, ҫынлӑха мала хуракан, пӗр-пӗрне хисеплекен ӗҫтешсем пулни. Вара пур тӗрӗслев витӗр те тухма пулать. Мӗнех, шӑпа унашкаллисенчен савӑнтармасть тӗк, вӑхӑт ҫитмен. Темле пулсан та, кирек ӑҫта лексен те кӑмӑл-сипет тасалӑхне упраса хӑварасчӗ, чунпа хытас марччӗ, ҫирӗпленесчӗ. Йывӑр ҫӗклем айӗнче авӑнсассӑн та хуҫӑлас марччӗ!

**Ольга ИВАНОВА**

# Андрей атте: "Сывлӑх, хал пур чухне чуна ҫӑлас тесе тӑрӑшмалла



*Иркутск пурнӑҫӗнче юлашки ҫулсенче пулса иртнӗ паллӑ ӗҫ-пуҫран уйӑрмах асра юлни – пӗлтӗрхи ҫу уйӑхӗнче хулари чи ватӑ чиркӳсенчен пӗрне, Господь Иерусалима кӗнӗ ячӗллӗ храма, святить туни. «Чиркӳ ытарӗ те шӗкӗрӗ 82 ҫул иртсен каялла таврӑнчӗ», – тесе хакларӗҫ иркутянсем храм чӑн чӗрӗлнине.*

Ҫак храм историйӗ Тухӑҫ Ҫӗпӗрӗн тӗп хулин масарӗпе ҫыхӑннӑ. Авалхи Иркутскра, ҫӗр-шыври урӑх хуласенчи пекех, ҫынсене ытларах чиркӳ тавра пытарнӑ. 1772 ҫултан вара, Кӗтерне патша указӗ хыҫҫӑн, вилнисене пытарма Раҫҫей хулисенче ятарлӑ вырӑнсем уйӑрма тытӑннӑ. II Екатерина указӗпе килӗшӳллӗн Иркутскри Иерусалим масарне хывнӑ. 1793 ҫулта М.Сибиряков сарт (купса) ҫакӑнта чиркӳ уҫма укҫа-тенкӗ парать. Тепӗр икӗ ҫултан Господь Иерусалима кӗнӗ ячӗллӗ храма святить тунӑ. XIX ӗмӗрте ҫӗр чӗтреннӗ вӑхӑтра чиркӳ кӑштах ишӗлнӗ. 1820-1830 ҫулсенче пӗр хутлӑ ҫӗнӗ чиркӳ хӑпартса лартнӑ тата тепӗр 5 ҫул шалти тирпей ӗҫӗсем пынӑ.



1931 ҫулта чиркӗве хупнӑ, ҫуртне культура училище йӗркелеме панӑ. Иерусалим масарӗ вырӑнӗнче вара кану тата культура паркӗ туса хунӑ. 2000 ҫулта культура училищипе тата парк администрацийӗ йышӑннӑ ҫурта Иркутск епархине тавӑрса панӑ. Виҫӗ ҫул хушши вӑл ахалех ларнӑ. Кайран вара ҫитти шӑтнӑран ҫурт ишӗлсе анас хӑрушлӑх тухса тӑнӑ. 2003 ҫулта янтӑлу ӗҫӗсем тытӑннӑ, тӗп купола тата ҫиттине туса пӗтерме йышӑннӑ. 2007 ҫулта Иркутск епархийӗн владыки чиркӗве хута яма Андрей аттене яваплансӑ.

Господь Иерусалима кӗни ячӗллӗ храм настоятелӗ Андрей Степанов протоиерей Чӑвашран. Андрей атте Патӑрьел районӗнчи Упамсара ҫуралса ӳснӗ. Турханти вӑтам шкултан тухсан Иркутскри патшалӑх университетне вӗренме кӗнӗ. Аслӑ шкул хыҫҫӑн Мускаври духовнӑй академире вӗреннӗ. Чиркӳ ӗҫӗсемшӗн патриархирен пысӑк наградана – эрешсемпе илемлетнӗ хӗресе тивӗҫнӗ.

***– Юхӑннӑ храма хута ярасси ҫӑмӑл ӗҫ мар. Владыка ыт-ахаль шанса памарӗ пуль ӗнтӗ яваплӑ ҫак ӗҫе? – ыйтрӑмӑр Андрей аттерен.***

– Унччен эпир «Нордэкс» компанине ертсе пыракан Алексей Дорошенкопа Иванпа Матрена ячӗллӗ ача-пӑча больницине юнашар Петербургри Ырлӑхлӑ Ксения ячӗллӗ храм хӑпартнӑччӗ. Опыт пуртан шанчӗ те владыка чиркӗ ве чӗртес ӗҫе.

Ыр кӑмӑллӑ пулӑшуҫӑсем те нухратҫӑсем (спонсорсем) – Алексей Дорошенкопа тата Виктор Матяшовпа Иерусалима кӗнин чиркӗвӗн ҫуртне пӑхма кайрӑмӑр. Хакласа ҫаврӑнчӗҫ те чутах макӑрса яратчӗҫ вӗсем: йӗри-тавран ишӗлнӗ-юхӑннӑ храма чӗртме укҫа-тенкӗ те, вӑхӑт та ытла нумай кирлӗ.

Сӑх сӑхсан, кӗлӗ тусан аптрани иртсе кайрӗ вӗсен – турӑ пулӑшнипе ӗҫе тытӑнтӑмӑр. Куполсене тытрӑмӑр, чан турулне (колокольня) лартрӑмӑр. Храма янтӑланӑ чух ҫӗр чӗтреннине шута илекен технологисемпе усӑ куртӑмӑр. 2010 ҫулта тулаш ӗҫсем вӗҫленчӗҫ, вара шалта илем кӗртме тытӑнтӑмӑр. 30-мӗш ҫулсенче культура училищине йӗркеленӗ чух храм ҫуртне шалтан виҫӗ хутлӑн хӑпартнӑ. Реставрациленӗ май вӗсене пӑсса малтанхи пек турӑмӑр. Нухратҫӑсем нумай пулӑшрӗҫ. Компанисен «Нордекс» ушкӑнӗн ыр кӑмӑллӑхне уйӑрмах палӑртмалла. Унӑн президенчӗ Алексей Дорошенко паян Господь Иерусалима кӗни храмӗн старости.

***– Чиркӗвӗн хӑйне евӗрлӗхне те асӑнар. Кунта Ҫветтуй Уар приделӗ пур. Храмӑн ҫак ҫумӑшӗнче тӗне кӗменнисене, хӑйсене ал хунисене, пӳкле вилнисене асӑнаҫҫӗ, кӗлӗ тӑваҫҫӗ. Ӑнланмалла: чиркӳ масарӑн тураш-килӗ пулмасть, Иерусалим ҫӑви ҫине те тахҫанах ҫын пытармаҫҫӗ. Реставраци ӗҫӗсенче хивре ҫӗнӗлӗхсем пурах-тӑр?***

– Шалти реставрацие тытӑнсан солея пысӑкрахран – хорсем (балконсем) пирки шухӑш ҫуралчӗ. Кӗлӗ тӑвакансем валли вырӑн ирӗклӗ пултӑр, иконостаса клирос ан хуплатӑр тесе хорсене чӑнласах тума шутларӑмӑр. Грузи ҫынни Мамука строитель проект хатӗрлерӗ, Грузи ӑстисен бригадине явӑҫтарчӗ. Храма чӑн чӗртме – шалти реставраци тытӑнсанах панихидӑсем, молебенсем кӑна мар, литургисем те ирттерме пуҫларӑмӑр.

***– Каласа панине тӗрӗс ӑнланнӑ пулсан – эсир пӗр храм настоятелӗ ҫеҫ мар?***

– Ырлӑхлӑ Ксения тата Петрпа Февронии храмӗсене пӑхатӑп. Епархи судӗнче те тӑратӑп.

***– Господь Иерусалима кӗни храмне шалтан илемлетнӗ чух Константинополь мӑнастирӗнчи мозаика элккипе те усӑ курнӑ тени чӑнах-и?***

– Константинопольте – Патша-хулара, хальхи Стамбулта, эпӗ 7 хутчен пултӑм. Кашнинчех Ҫветтуй София храмне кӗнӗ. Унчченхи чӗр илемрен унта мозаика

пайӗсем ҫеҫ юлнӑ. Мозаикӑна турккӑсем сӑрласа пӑснӑ тесе ӑнлантараҫҫӗ нумайӑшӗ, тӗрӗсех мар ку. София килтурӑшри чаплӑ мозаикӑна малтан турӑшсемпе кӗрешекен христиансемех пӑснӑ, кайран тин – турккӑсем.

Константинопольте пулсан тӗнчипе паллӑ Хора мӑнастирӗнчи Христос Хӑтаруҫӑ чиркӗвӗнчи мозаикӑпа киленмесӗр чун канмасть. Хорана IV ӗмӗртех никӗсленӗ. Турккӑсем Константинополе илсен Карийӗ мичӗте тунӑ кунта, фрескӑсемпе мозаикӑсене тирпейлӗн кӑна штукатуркӑпа сӗрсе тухнӑ. Иртнӗ ӗмӗр ҫурринче вӗсене тасатнӑ, ҫавӑнтанпа Хорана Карийӗ мичӗтӗ мар, музей тесе шутламалла. «Иосиф тӗлӗкӗ», «Тамӑка анни», «Хӑрушӑ суд» ӳкерчӗксене курма пин-пин ҫын килет кунта. Мозаика эрешӗсене мӑнастирте XIV ӗмӗртенпе хывма тытӑннӑ, вӗсене тутараканни II Андроник император министрӗ Федор Метохит тесе шутлаҫҫӗ. Иркутска таврӑнсан реставраторсене Хора музейӗнчи мозаика эрешне хума сӗнтӗм. Вӗсем килӗшрӗҫ.

***– Хора мӑнастир ячӗ грекла хула хӗрри тенине пӗлтерет. Турккӑлла Карийӗ те хӗррийӗ тениех. Чӑвашла ҫак мӑнастир – Хӗрри. Иркутскра чӑвашсене куркалатӑр-и?***

– Ентешсем кунта «Юлташ» ятлӑ чӑваш наци культура автономине 1990 ҫултах йӗркеленӗ. Автономин хальхи ертӳҫине Вероника Тимофеевӑна та пӗлетӗп. Кӑҫал ентешсем Иркутскра курав йӗркелерӗҫ, пыракансене наци тумӗсемпе кӗтсе илчӗҫ. Ҫакна та ӑнланмалла: чӑвашсем йышлӑн пурӑнакан тӑрӑх – Зимински районӗ. Икӗ пысӑк чӑваш ялӗ унта – Новолетники тата Масляногорск. Студент чухне практикӑна кайсан унта пулнӑччӗ. Иркутскран инҫе вӗсем – 400 ҫухрӑма яхӑн.

– Иркутск тесен Байкал чӗлхе вӗҫӗнче.

– Хула шӑп Байкал хӗрринче лармасть – унта ҫитме 78 ҫухрӑм. Шупашкар ҫыннисем пурте Атӑл хӗррине каяҫҫӗ-и? Ҫук ӗнтӗ. Иркутск халӑхӗ те ҫавах – хула ҫынни кашниех Байкал хӗррине кайса ҫӳрет тесе ан шухӑшлӑр. Ҫитменнине – пирӗн енчи кӳлӗ ҫыранӗ – сӑртлӑ-туллӑ. Кӳлӗ тепӗр енче вара – Улан-Удэ енче – ҫыран айлӑмлӑ, улӑхлӑ. Байкал – сивӗ, шыв температури вӑтамран 4 градус. Тӗл-тӗл вырӑнсенче шыв ҫулла 20 градус таран ӑшӑнать. Ҫавӑнта ҫӳрет ытларахӑшӗ. Канма хӑтлӑ чи ҫывӑх вырӑн – Пӗчӗк тинӗс ятлӑскер – Иркутскран 300 ҫухрӑмра. Май пулсан хула ҫыннисем урӑх тӑрӑха е ют ҫӗр-шыва кайма кӑмӑллаҫҫӗ. Эпӗ Турцире тӑтӑш пулатӑп. Босфор проливӗн романтики, Мрамор тинӗсне хӗвел анни мӗне тӑрать! Стамбул ҫеҫ мар, Анталья та питӗ килӗшет.

***– Шупашкарӑн официаллӑ пӗр тӑванлашнӑ хула виҫҫӗ: Венгрири – Эгер, Кубӑри – Санта-Клара, Турцири – Анталья. Шупашкарӑн «вӑрӑм алли» Вӑта ҫӗр тинӗсӗ хӗррине те ҫитнӗ, Атлантика океанӗ урлӑ та каҫнӑ! Пекинпа тӑванлашасси ҫеҫ юлнӑ. Тахҫан китайсемпе кӳршӗллӗ пулнине аса илмелле те... Китайра та пулнӑ ахӑр?***

– Пӗрре ҫеҫ мар. Тахҫан чӑвашсем китайсемпе юнашар пурӑнни паян та туйӑнать. Кӑнтӑр еннерех кайсан ҫак сисӗм сирӗлет. Тӳрех каламалла: Китай культури питӗ хӑйне евӗрлӗ, чӑвашсемпе пӗр пеклӗх пурри – пӗтӗмпе пӗр пеккине пӗлтермест. Уйрӑмми ытларах. Китай кухнине «тӗрӗслесессӗнех» туйса илетӗн ҫакна. Хӑш-пӗр апатҫимӗҫне куриччен – курманни. Таҫти аваллӑхри тӑванлӑх пур ӗнтӗ Китай культуринче – килӗшетӗп. Юрри-кӗввине илтсен – чӑваш ҫеммисем пекех.

***– Пирӗн чаплӑ ентеш Иакинф атте – Никита Бичурин Китай ытарӗнчен мӗн виличченех хӑтӑлайман.***

– Вырӑс православи чиркӗвӗн IX тӗн миссийӗн пуҫлӑхӗ Иакинф архимандрит наукӑра тарӑн йӗр хӑварнипе паллӑ. Пӗлтӗрхи юпа уйӑхӗнче пултӑм эпӗ Пекинра. Раҫҫей элчелӗхӗ масси пулнӑ ҫӗрте вырнаҫнӑ. Элчелӗх 16 гектар ҫӗр йышӑнать пулин те унччченхи масси территорийӗнчен чылай пӗчӗкрех ҫакӑ.

***– Ҫӗпӗр халӑхӗн менталитечӗ Атӑлҫи халӑхӗпе танлаштарсан – урӑхларах-и е уйрӑмлӑх ҫук-и?***

– Ҫӗпӗре вырнаҫакансем хӑй вӑхӑтӗнче пит савӑнсах килмен кунта. Тӗрме-каторга, ссылка, хӗсмет ҫыннисем тӗпленнӗ ҫак тӑрӑхра. Ирӗк ҫӗр шыраса килекенсем те пулнӑ. Ҫӗр-шывӗпех пуҫтарӑннӑ Ҫӗпӗре, паттӑр ҫынсем хывнӑ кунти ҫулсене. Менталитет тӗлӗшӗнчен анлӑ кӑмӑллӑ, хастар халӑх пурӑнать Тухӑҫ Ҫӗпӗрте.

***– Байкал казакӗсем тени аса килет кун пек чух.***

– Хӑй вӑхӑтӗнче Байкал казакӗсем Ҫӗпӗре кутӑн ҫавӑрнӑ. Казаксем паян чӗрӗлеҫҫӗ темелле. Ҫапах ӗлӗкхи хавхаллӑ хастарсемпе танлаштараймӑн вӗсене. Хӗҫ тытма пӗлекенсем пур пулин те – ҫар тумӗ тӑхӑннӑ скоморохсем пек ҫеҫ хальхи казаксем. Кулӑшли нумай. Казаксем православи тӗнӗшӗн кар тӑраҫҫӗ – сӑмах ҫук, ҫав вӑхӑтрах тӗрӗссине те каламалла. Ӗлӗкхи казаксем камсем пулнине чухланӑран танлаштаратӑп та – тӗрӗсрех, танлаштараймастӑп унччехисене паянхисемпе.

***– Вулакансене мӗн калана пулӑттӑр?***

– Этем ҫут ҫанталӑкӗ пирки каласшӑн. Ватӑлсан, чирлесе халсӑрлансан, ӑнмасан этем турра аса илет. Сывӑ, вӑйлӑ, телейлӗ чухне вара чылай ҫыннӑн чунне упрас-хӑтарас шухӑш та ҫук. Сывлӑх, хал пур чухне турра кӗлӗ тумалла, чуна ҫӑлас тесе тӑрӑшмалла.

**Ускатум КУНЦУЙ калаҫнӑ**





# Хĕвел çаврăнăш юрататакан пике



Таньăн пуçĕнче çил выляни çаплипех тĕлĕнтерет. Çирĕм урлă каçнăскерĕн пуçтарăнчăклăхĕ пĕрре те çук. Сăмах панине тытма пĕлмест, самантрах çилпе вĕçтерсе яма пултарать. Е тата пĕр ĕç тума пуçланăскер ун пирки йăлт манса шыва кĕме каять е урама тухса хĕвел çаврăнăшĕ шĕкĕлчет.

Хĕвел çаврăнăшĕ тенĕрен – Таня ăна çав тери юратать. Кашни кун ĕç хыççăн пасара юртать ăна туянма. Пĕррехинче ĕçре пакша пекех катса ларатчĕ тутлăскере. Сасартăк уçă чӳречерен çил кĕчĕ те хĕвел çаврăнăш хуппи хутаçне урайне йăлтах сапаларĕ.

– Çил ачине тытса хăлхинчен пăрăттăм, çӳрет кунта сăтăр туса! Тепĕр тесен, хама кӳрентерекенсене чăтма пултараймастăп, – терĕ тарăхса.

– Ара, калаçма пултарайманскерпе мĕн пустуй вăрçăнатăн? Ним çук çĕртен тарăхса чӗрӳне ан ыраттарха, – ләплантартăм хайхискере.

– Сана мĕн ĕç! Кампа вăрçăнас килет, çавна тапăнатăп та! – кăшкăрашрĕ вăл хĕремесленсех.

Шăп çак вăхăтра алăк уçăлчĕ те пӳлĕме урай çăвакан кĕрсе тăчĕ. Урайĕнчи тасамарлăха курсан шăртланчĕ.

– Ах, ирĕк парас пулсан-и, тĕнчери мĕн пур хĕвел çаврăнăш уйне çунтарса янă пулăттăм. Тупата турăшăн та! Мĕн пăхса ларатăр, шăпăр илĕр те пуçтарăр çӳп-çапа! – тесе кăшкăрашма пуçларĕ вăл.

– Шутламастăп та, сире тата мĕншĕн укçа тӳлеççĕ? Хăвăр юратнă ĕçĕре тăрăшсах пурнăçлăр. Урăх ан чĕн, пĕр сăмах та! – çатăлтатрĕ Таня ура çине ялтах сиксе тăнă май.

Тепĕр самант. Çуркунне пĕчĕк пахчана пĕр лаптăк çĕр çине хĕвел çаврăнăшĕ лартрĕ Таня. Ытти пахча çимĕç пирки манса çав вырăнта тапăртатрĕ кăна. Шăварать, çĕрне кăпкалатать, çум курăкран тасатать.

– Хĕлле хĕвел çаврăнăш яшки кăна пĕçерсе çиетĕн пулĕ ĕнтĕ. Çĕр улми ани сана пĕрре те кăсăклантармасть иккен. Унта хурама ӳссен те саншăн ик айкки те тăвайкки. Эх, яланхиллех сан пуçунта çил вылять çав. Аннӳне пулăшас тесе пĕрре те шухăшламастăн, – терĕ амăшĕ кӳренӳллĕн.

Хыт чĕреллех çав Таня. Амăшĕ мĕн каланине хăлхине те чикмест. Хăй мĕн шухăшланă пекех пурнăçлать.

Хĕвел çаврăнăшсем сар чечеке ларсан чăх пек савăнчĕ Таня. Кашнин патне пырса симĕс çулçинчен ачашлать, туни çине ларнă шăнасене сăмса тутрипе хăвалать.

– Ах, хăçан пиççе çитеççĕ-ши ылтăн çимĕçĕмсем, манран телейлĕ çын та пулмĕ вара, – терĕ савăнăçлăн.

Кайăксен те хырăмĕсем выçаççĕ çав. Вĕсен те çиес килет. Акă пит ăнса çитĕнекен хĕвел çаврăнăшĕсем çине кураксем тапăнчĕç. Выçăскерсене тем пек хăваласан та пур пĕр каялла вĕçсе килеççĕ те «кучченеçе» шĕкĕлчеççĕ кăна.

– Путсĕрсем! Янтă апат тутлă çав! Хăвăр ĕçлесе хăвăр хырăмăра тăрантарма вĕренĕр-ха, – кăшкăрашрĕ Таня. – Эп сире кун пек иртĕхтерместĕп-ха, хамран култармастăп.

Хĕвел çаврăнăшсене пурне те тутăрсемпе çыхса хучĕ.

– Капла пĕр пĕрчине те ас тивеймеççĕ. Кайччăр авă кӳршĕ пахчине, унта тем те пур. Хĕп-хĕрлĕ пан улми карăнса ӳсет авă, помидорĕсем те куçа илĕртсе лараççĕ, купăсти те йăрана вырнаçми самăр. Ним тиркемелли те çук, пурне те ас тивсе пăхчăр, – мăкăртатрĕ хайхискер ниепле те чарăнма пĕлеймесĕр.

Тепĕр икĕ эрнерен яла кайсан Таня тӳрех пахчана чупса тухрĕ. Пĕр хĕвел çаврăнăш патне пырса тутăрне салтрĕ те çари çухăрса ячĕ.

– Анне-е-е-е! Вилетĕ-ĕ-ĕп! – терĕ те картише каялла вирхĕнсе кĕчĕ.

Аллипе çапкалашса, тăпăр-тăпăр тапăртатрĕ пĕр вырăнта хайхискер.

– Турă çырлахтăрах, ухмаха тухмарĕ пулĕ те манăн ача? – терĕ ăмăшĕ куçне чарса.

Хам та юпа пек хытрăм. Аптăранă енне ун çине пĕр витре шыв сапрăм. Тинех лăпланчĕ Таня.

– Тавах, сана, Лисукăм. Вилĕмрен çăлтăн, – тесе сывлăш çавăрса ячĕ тусăм. – Хĕвел çаврăнăш епле ӳсет тесе пĕлесшĕнччĕ те ăна çыхса хунă тутăра салтрăм. Ĕненетĕн-и е çук-и, унта йăлтах шăши иленнĕ. Ав пĕри çанă тăрăх хĕве кĕрсе кайрĕ. Хăранипе чĕре çурăлса каятчĕ ахăртнех.

Тĕлĕнсе каймалла: Таньăн пур хĕвел çаврăнăшне те шăшисем шĕкĕлчесе пĕтернĕ. Хупписене çеç хăварнă.

– Шел, кăçал хам çитĕнтернĕ хĕвел çаврăнăша ас тивсе курма тӳр килмерĕ, – тесе кулянать мал ĕмĕтлĕ апăрша.

Таньăн амăшĕ вара çав тери кăмăллă.

– Урăх хĕвел çаврăнăшĕ лартатăп тесе çăварне те уçмасть пулĕ-ха. Ара, шăшисем сехрине хăпартрĕç вĕт, çав кирлĕ ăна. Халĕ малашне ыттисемпе пĕрле çĕр улми, купăста-хăяр, помидор йăранĕсенче тар кăларса ĕçлет пулĕ-ха, – терĕ пĕчĕк ача пекех йăл кулса.

**Петĕр ЛИСУКĔ**

# Вăхăтпа йăнăшнисем



***Çап-çамрăк хĕр-упраçшăн «юрату» сăмах пек илемлĕн те çепĕççĕн янăракан сасă тата пур-ши? Тĕнче уçлăхĕн симфонийĕ евĕрех кĕвĕленекен: «Эпĕ сана юрататăп!» – юрă çаврăмне илтсе курман чиперккесем (пикесен шухăшĕпе) хăйсен тĕссĕр-сĕткенсĕр пурнăçĕнче телей мĕнне пĕлмеççĕ те.***

Çитет хĕрсем пирки калаçса – йĕкĕтсене аса илер-ха. Вĕсем те пĕрремĕш юратупа тĕл пулаççĕ, туйăмсен серепине лекеççĕ. Паллă ĕнтĕ, тетеле çакланнă çăрттанран телейлĕрех туяççĕ хăйсене, хĕрĕсем вара каччисене килĕштереççĕ пулсан – 7-мĕш тӳпенех пурăнма куçаççĕ (вăхăтлăха).

Хăш чух вара юрату вăхăчĕ тӳр килмест, юратакансене пĕр-пĕринчен вăхăт пĕр шелсĕр уйăрса тăрать. Сахал çын каçаять çак рубикон урлă. Йĕкĕт хăйĕнчен аслăрах хĕрарăма юрататъ пулсан – вĕсемшĕн малашлăх алăкĕ куçкĕрет хупă. Ĕлĕк вара, темиçе ăру каялла çеç, арăмĕ упăшкинчен аслăрах пулни ял пурнăçĕнче лайăх шутланнă. Халĕ вара ун пек мар.

Журналра çырса кăтартакан истори чăваш ялĕнче мар, хулара – Шупашкарта пулса иртнĕ. Журналăн респондентне сăмах парар.

– Ун чухне училищĕре вĕренетĕп. Пĕррехинче ирпе подъезд умĕнче çамрăк мăшăрпа тĕл пултăм. Йĕри-тавра михĕсем, чĕркемсем – çĕнĕ çĕре пурăнма куçса килнĕ. Хваттерĕ пиртен пĕр этаж аяларах иккен. Паллашрăм пулас кӳршĕсемпе. Упăшкине Денис тесе чĕнеççĕ. Тӳрех курăнать – чĕмсĕр арçын, хăйне мăн кăмăллăн тытать. Арăмĕ – Валя. Сăнĕпе те, пĕвĕпе те илемлĕскер калаçма юрататъ – питĕ кăмăллă хĕрарăм. Пĕчĕк хĕрĕ те пур – Алина.

Кăшт вăхăт иртсен куçса килнĕ çемье хваттерне юсама тытăнчĕ – çĕнĕ шăпăр çĕнĕлле шăлать вĕт. «Кирлĕ пулсан пулăшу ыйтăр – именсе ан тăрăр», – терĕм эпĕ Денispa Вальăна. Йывăр сĕтел-пукана вырăнтан куçарма, миххе тултарнă ăпăр-тапăра илсе тухма пулăшкалаттăм вĕсене. Юсав ĕçĕсемпе аппаланнă май аялти хутри кӳршĕсемпе калаçатăнах, мĕне те пулин сӳтсе яватăн. Денис яланхиллех питех чĕнместчĕ. Валя шăкăл-шăкăл кăна калаçатчĕ. Çамрăк хĕрарăмпа иксĕмĕрĕн чунра та, тăнра та пĕр-пеклĕхсем нумайййине туйса илтĕм ăнсăртран – хам та кĕтмен çакна. Кĕçех пирĕн хушăмăрта темле ачаш та вăрттăн асамлăх çуралнине туйса илтĕмĕр иксĕмĕр те. Вальăна пĕрмай курас, унпа ялан калаçас килнĕрен юсав ĕçĕсенче пулăшма тесе вĕсен хваттерне тăтăш кĕрсе тухма тытăнтăм. Çамрăк çемьере тăнăçлăх çукки малтанах кăшт сисĕнетчĕ. Мана пула бикфорд шнурĕ тата хытăрах çунма тытăннă иккен.

Пĕр кунхине çамрăк хĕрарăм юлашки вăхăтра упăшкипе вăрçăннине пĕлтерчĕ. Денис кĕвĕçет: мана арăмĕ çумне хушса хунă. Вĕсен çемйинче килĕшӳ пачах çухалчĕ, çамрăк мăшăр пĕр чĕлхе тупма шухăшламарĕ те. Часах вĕсем уйрăлчĕç, Денис урăх çĕре пурăнма куçрĕ.

Пушă вăхăта эпĕ ялан Валя патĕнче ирттерме тытăнтăм. Тирпейлĕ пулма, кил-çурта пуçтарма çунса тăратчĕ вăл, апат пĕçерме те ăстаччĕ. Чунĕпе те аслăччĕ вăл: хĕрарăмăн тĕнче курăмне, кăмăл-сипетне анлăрах курма вĕрентрĕ мана. Пĕчĕк Алина та ман пата туртăнатчĕ. Вальăн амăшĕ вара мана юратмасчĕ – чăтма пултараймастчĕ. Хĕрĕ патне тăтăш килнĕрен яланах тĕл пулаттăмăр унпа. «Мĕн тупнă эсĕ çак 17-ри ача çумĕнче?» – вăрçатчĕ хĕрне амăшĕ.

Вĕреннипе пĕрлех эпĕ пасарта ĕçлеме вырнаçнăччĕ. Укça-тенкĕне Вальăпа пĕчĕк Алинăна пулăшас тесе тăкаклаттăм, ĕçлесе илнинчен киле валли пĕр пус та хăварман темелле. Вальăпа çӳренине манăн юлташсем те килĕштерместчĕç: «Вăл сана валли мар, мĕн тупнă эсĕ хăвăнтан 9 çул аслăрах хĕрарăмра?» – тесе шав вăрçатчĕç те кулатчĕç. «Тĕнчипе те унран лайăхрах хĕр çук маншăн!» – ăнлантараттăмччĕ вĕсене.

Пирĕн юратуран путлĕ япала тухас çуккине Валя питĕ лайăх ăнланнă. Унăн амăшĕ çеç-и – манăн атте-анне те питĕ хирĕçчĕ: «Чарăн унпа тĕл пулма! Çап-çамрăк пуçпа ват хĕрарăмпа ан çыхлан-ха», – тесе хăлхана йӳçĕтнĕччĕ. Майпен-майпен Валя манранютшăнма тытăнчĕ – ятарласа ĕнтĕ. Кайран хăйĕнчен пĕр-ик çул аслăрах арçын тупрĕ те ăна качча тухрĕ. Ун патне пурăнма куçрĕ.

Денисран уйрăлнă хыççăн Вальăпа çывăхлансан унран çемьери тăнăçу-килĕшӳ мĕнрен килет тесе ыйткаланăччĕ. Пит калаçма юратмастчĕ манăн пĕрремĕш юрату арканнă çемье пурнăçĕ пирки. Тĕрĕссипе, вăл мĕн хуравланине пит хăлхана та чикмен эпĕ: ахалех паллă – вĕсем пĕр-пĕринчен сивĕннĕ. Вун çиччĕри куçпа – пурнăç çакăнпа кăна пĕтмест.

Çемьере килĕшӳ çукки чăн малтан камран килет-ши? Паллах, иккĕшĕнчен те. Упăшкине хурласа арăмне ырлани, е арăмне вăрçса упăшкине мухтани чăнлăхран пăрăнни. Пĕр-пĕрне ăнланма, упрама пĕлменни, кирлĕ вăхăтра ăшă сăмах каламанни вара çемье пурнăçне такăнтарасси патне илсе пырать. Ăнланмалла ĕнтĕ, упăшкин арăмне ăшă сăмах каласах тăмалла, манар мар: хĕрарăмсем хăлхапа юратаççĕ.

Вăхăт инртнĕçем мана кăсăклă ыйту канăç пами пулчĕ. Енчен те Вальăпа тăнтăшсем пулнă тăк, енчен те (темле майпа тейĕпĕр) пĕр çемьене чăмăртаннă пулсан? Мĕнле мăшăр пулаттăмăр-ши эпир?



# Ял сысни, е "Пуçсăр юлан утçă"

***Ĕлĕк-авал, XIX ĕмĕрте, Шупашкар халăхне кăнтăр кунĕнчех совĕçĕпе те чысĕпе таса, ним айăпсăр килти выльăх, Селиванов купцан сысни мĕнлерех йышши хăратни пирки çырнăччĕ ĕнтĕ иртнĕ номерте. Нăрикнăрик нумай çура амăшне тухатмăшçаврăнмăш тесе чутах леш тĕнчене ăсатман Шупашкарсем – çав тери тĕшмĕш те шиклĕ этемсем.***

Ĕмĕр хушшинчех халăх мĕнле улшăнать иккен! Ĕлĕк авă хула çыннисем те йытăран кăшт кăна пысăкрах сысна курнă-курман хăранипе ухмаха тухса каясла çӳренĕ урам тăрăх. Енчен те мăн-мăн асаттесем шуйттан чĕппине курнă пулсан – хаспати кăна: мĕн сиксе тухатчĕ? XX ĕмĕрте вара чăваш ялĕнчи ачапăча какуй усалăн чĕппине, чи аслă шуйттанне хăйне чĕрĕлле ярса тытса клуб умне майракинчен кăкарса хума хатĕр çитĕннĕ. Шкулта çавăн пек вĕрентнĕ, тĕрĕс воспитани панă. Каласа парар туссене чăн пулнине. Çапла вара, тискер тухатмăш сыснана çаврăннин 2-мĕш пайĕ.

XX ĕмĕрĕн 70-мĕшĕсем. Ун чухне клубра кашни каç кино кăтартаççĕ. Шкул ачисем валли билет хакĕ 5 пус, çамрăксен-ваттисен – 20 пус тӳлемелле. Инди киновĕ тесен ял халăхĕ каçсах каять, кинoран тухакан хĕрарăмсен (хĕрсен те) йĕре-йĕре йĕпетнĕ тутăрĕсене пăрсан – витре куççуль ним мар пуçтарăнать. Экран çине çĕнĕ фильм тухсан та картинăпа кăсăкланасси çивĕч те хĕрӳ пырать: пĕр каçрах кинона темиçе ялта черетпе кăтартаççĕ, клубран клуба кинолента турттарма автомобильпе çеç мар тăвата уралла – яланах шанчăклă, ниçта та путса ларман, çултан пăрăнман транспортпа та усă кураççĕ. Халăх кăмăлĕн екки киномеханик вăр-варлăхĕнчен тата колхоз лаши ывăнма пĕлменнинчен килет. Пĕтĕмĕшле каласан – романтика йĕри таврa та мăй таран, чарăнми тапса тăрать!

Совет Союзĕпе Куба «Пуçсăр юланутçă» фильм ӳкерсен çĕнĕ картинăна чăваш ялĕсенче хăçан кăтартма тытăнаççĕ-ши тесе пĕрмай шухăшласа çӳремен ĕнтĕ эпир. Чăнкă та малкай ирландец, мустанг тытакан Морис Джеральд пирĕн яла çаврăнса çитессе пĕлнĕ те ĕненнĕ, лăпкăн кĕтнĕ. Пĕрре çапла шкултан тухсан колхоз кантурĕ тата клуб умĕнче тĕслĕ киноафишăсем çакăнса тăра параççĕ. «Кольт» револьвер тытнă Джеральд – Олег Видов – эпир кинона пымасан кăмăлсăр юласси тӳрех паллă.

Каçпа 5 тĕлне пуçтарăнтăмăр клуба. Никам та килте ларса юлман пулмалла, клуба чĕрĕлле çăтса ярасла чĕпĕн (рой) сырса илнĕ тейĕн – урам тулли ачапăча уйăрнă хурт пек янрать-сĕрлет. Кинолентисене вара халĕ те илсе килмен-ха – «Пуçсăр юланутçăна» юнашар ялта кăтартаççĕ. Хĕллехи каç ăшă, юр йĕпе. Хăш самантра юр вăрçи тапранса та кайрĕ, хăвăрт перекен тупăсем, шултра калибрлă пулеметсем хута кайрĕç тейĕн – ăçта пăх унта юр чăмакки черечĕсем.

Ача-пăча кăна мар – темле сысна та пирĕнпе пĕрле паттăррăн çапăçма тухни кĕчĕ кайрĕ куçа. Тăвата уралла БТР пек ыткăнса çӳрет ачасен хушшинче. Пысăк ушкăнра яланах чи ăсли тупăнать: «Тухатмăш карчăк ку! Сысна пек пулса тухнă!» – кăшкăрчĕ такам. Калдунсене витĕр курса тăракан ача камне те пăхмарăмăр, юр чăмакки çил-тăманĕ сыснана хупласа та хучĕ. «Пуçсăр юланутçăна» курма пуçсăр ачасем пухăннă пулмалла клуба.

«Снарядсем» айне пулнă нюркка мĕнле çухăрса ячĕ – чĕресене чутах çурса пăрахмарĕ. Хăй чĕлхипе караул! кăшкăракан сысна циркулярка пăчки пек çухăрнине илтсен пурте – пессимист пулса çуралнисем те клуб умĕнче хыçкаланса çӳрекен чĕр чун тап-таса тухатмăш пулнине ĕненсе лартрĕç. Юр чăмаккисемпе тĕкĕле-тĕкĕле сыснана кас тăрăх хăваларăмăр. Таçти темле хушăка кĕрсе кайса куçран хăтăлчĕ çĕрлехи смена ĕçченĕ.

Кинолентăсене вара такки илсе килмеççĕ. Вĕтшакăр шпунтиксем чăтаймарĕç, килĕсене таплаттарчĕç – ырă каç сире, пĕчĕккисем! Эпир, кĕтсе йăлăхнăран, юрпа персе выляма та пăрахрăмăр. Чылайăшĕ киле пăрахса каяс шухăшпа тăрать. Çакăн чухне пирĕн хушăмăрта каллех пасăрхи сысна курăнса кайрĕ. «Тухатмăш карчăк çав тери кино курасшăн-ши вара?!» – йăлт аптраса кайрăмăр эпир. «Такама тытма тухнă вăл. Атя хăйне тытатпăр та çыхса хуратпăр!» – пачĕ тахăшĕ шутсăр ăслă шухăш. Ура! кăшкăрса сысна çине ыткăнтăмăр. Такам ăна хыçалти уринчен ярса тытса та ĕлкĕрчĕ. Нюркка тапкалашса илчĕ те – тухатмăшсене ал вĕççĕн тытакан çамрăк сунарçă таçта çити сирпĕнсе кайрĕ. Хупăрласа илнĕ чĕр чун чĕвен тăрас пек хăртлатса илчĕ те ача карти витĕр арăслан пек мĕкĕрсе сиккипе ĕрĕхсе тухса кайрĕ. Мĕнлерех йышши калдун – хăватлăран та хăватли! Юр чăмаккисемпе кăна мар, ал айне лекнĕ патаксемпе хăваларăмăр иртĕнсе кай-

нă тухатмăш-çаврăнмăша. «Малти урине тăпăлтарса кăлармалла е касса илмелле! Вара тухатмăш карчăк каялла çынна çаврăнсан хăрах алăсăр юлать. Вара пĕлетпĕр çак сысна чăннипе кам иккенне!» – харăс ăс пачĕç темиçе ача. Камсемпе шкулта вĕренетпĕр?! Тухатмăшсене мулкач тытнă пек ярса илекенсемпе-и! Ăнланăр, хаклă туссем, ун чухне Гарри Поттер çинчен никам та вуламан та, пĕлмен те. Чăваш ачисем Англири тантăшĕсенчен чылай аталаннăрах пулнă вăл вăхăтра.

Сысна ăнланчĕ пулмалла чăваш ачисем, мухтавлă совет школьникĕсем унăн выльăх сăнне сирсе пăрахса ял йыша тухатмăшăн чăн сăнне кăтартма шухăш тытнине. Пиккене кĕнĕ нимĕç бомбардировщикĕ пек уласа çаврăнмăш-сысна клуба хирĕç ларакан çурт хапхи айĕнчен картишне чăмрĕ. Пулмарĕ тытасси калдуна, тухатмăш пусмăрĕнчен тăван яла ирĕке кăларма темиçе çеккунт кăна кирлĕччĕ те...

Камсен картишне кĕрсе кайнăран тухатмăш карчăк кам пулма пултарнине те чухларăмăр – Пălля аппа. Кам шухăшланă патакпа аран кăштăртатса çӳрекен Пăлля аппа (хут çинче – Апполинария) хăватлă та вăйлă çаврăнмăш карчăк пулнине?! Сыснаран çын пулма нумай вăхăт та кирлĕ мар иккен: хăш самантра урама патак йăтнă Пăлля аппа сиксе те тухрĕ. Эх вăрçать, эх çунтарать. Ухмах вырăнне хурать пире: лăкăш-лакăш карчăк чăннипе кам пулнине питĕ лайăх чухлатпăр ĕнтĕ. Çаврăнмăш сыснана тытма тухнă  çамрăк ăмăрткайăксене кăшкăрса вăрçнипе улталаймăн.

Часах сăрт çинчен кӳлнĕ лаша чупса анни курăнчĕ – тинех илсе килчĕç кинона.

Тепĕр кунне шкулта пĕтĕмĕшле линейкăна пуçтарчĕç. Халь-халь аça çапса çумăр çутарас сăнлă директор çумĕнче Пăлля аппа тăрать. «Кам ĕнер клуба кино курма кайнă – мала тухăр!» – шалт хушрĕ шкул турри. Тухса тăтăмăр чĕпĕнĕпех. «Карчăк сысни сирĕн умăрта мĕн айăпа кĕнĕ? Мĕн хăтланнă эсир ĕнер?!» – пуçларĕ директор воспитани паракан витĕмлĕ арие. Вăйлă пăскăртрĕ пире шкул турри – вăрçма та лайăх пĕлетчĕ: талант.

Шкултан таврăннă чух пăхатпăр та  – Пăлля аппасем умĕнче сысна уткаласа çӳрет! Мĕнле курчĕ пире – цетнер таякан çăрттан пек тӳрех хăпха айне чăмрĕ. Хапхи мĕнле ишĕлсе анмарĕ тульккăш! Ас тăвать иккен ĕнерхи каçа. Çак вăхăтра кӳршĕ çуртран урама Пăлля аппа та лăкăштатса тухрĕ. Чутах йăванса каяттăмăр аптранипе – карчăк чăнах та сысна усрать! Нимĕнле çаврăнмăш та мар туяпа кăштăртатса çӳрекен ватă хĕрарăм. Мĕнле халĕччен асăрхаман темĕн пысăкăш сыснана? Картишĕнчен тухсан çур урам йышăнать те – ас туса юлман. Нивушлĕ хăпаракан чусталла пĕр-икĕ уйăхрах çитĕнсе мăн сысналаннă? «Капкăн» журналта тахçан сысна çури пĕр кукурус пуçĕпех слон пысăкăш ӳссе кайнине ӳкерсе кăтартнăччĕ – «Кукуруза парать усă!» – тесех ĕнентернĕччĕ.  Пăлля аппа та кил карти кайăкне кукуруспа çитĕнтернĕ-ши? Эпир вара: «Урине тăпăлтарса кăлармалла!» – тесе хăваларăмăр ним айăпсăр сыснана. Ăнланмалла ĕнтĕ мĕншĕн юратнă директор линейкăра арçын ачасенне хăйсенне ал-урине тăпăлтарса кăларма хатĕрччĕ. Вăт кай «Пуççăр юланутçă» курма!

**Руслан АЗМАБАД**

# Хуплашкари сăн ӳкерчĕк

Патшалăх статистикин Федераллă службин Чăваш территори органне (хамăрла та ăнланмалла каласан – Чăвашстата) кайса чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсенчен чи «чăнкисем» Раççей Федерацийĕнче тата çут тĕнчере камсем тесе юри интересленĕр-ха.

Пурне те пĕлекен статистика хуравлаймасть çак ыйтăва. Федераци хĕсметлĕхĕн те çитменлĕхсем пур – нимĕн те тăваймастăн.

«Самант» журнал вара пĕлет хурава. Ăнланмалла ĕнтĕ: «чăнкă» вĕрентекенĕн ĕçри тата пурнăçри акăшмакăш хиврелĕхне ĕнентерекен паспорт пулмалла. Пур унашкал хăватлă документ – «Самант» журнала çырăннине çирĕплетекен квитанци.

Раççей Федерацийĕнчи шкулсене илес пулсассăн – хаваспа та ушкăнпа «Самант» журнала çырăнакан чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем Шупашкарти 10-мĕш шкулта ĕçлеççĕ. Çут тĕнчери чи «чăнкисем» – вĕсем! Иртнĕ çулах ытти учителе тĕслĕх кăтартнăччĕ хастар вĕрентекенсем: Анисимова Л.В., Анисимова Ю.Е., Архипова М.И., Григорьева Н.Р., Егорова А.В., Лебедева Е.Г., Яковлева О.Н.

Çитмĕл те çичĕ юрату тĕнчере,
Пирĕн юрату пĕртен пĕрре:
Пирĕн юрату – «Самант»!

Вулакан, çакна ан ман! – тесе пĕчĕк гимн та хывнăччĕ хастар педагогсем.

***Кăçал вара вĕсен лозунгĕ çапла:***

***«Самант» çырăнса илекен – чăн-чăн вĕрентекен!***



# Кама качча тухас?



***Çак ыйтăва «Самант» тăтăшах çĕклет. Тĕллевлĕ ыйтăм ирттернĕ чухне хĕрсем пурнăçне те шăпине чăваш каччипе çеç çыхăнтарасчĕ тесе куç мăчлаттармасăр, салтак пек «смирно!» тӳрленсе тăрса хăюллăнах хуравлаççĕ пулсан та – чăнлăх кăшт урăхларах. Эпир ĕнтĕ ача садне çӳрекен ача-пăча çулĕнчен иртрĕмĕр, тĕнчере кĕнчеле нумайăшне пĕлетпĕр, ват çерçие хывăхпа улталама питĕ те питĕ йывăррине те таçта илтнĕ.***

«Самант» тусĕсемшĕн ятсăр-шывсăр тăрса юлнă пĕр хĕр-упраçа сăмах парар-ха эппин.

«Мана мĕн çамрăкран çар çыннисем – уйрăмах десантниксемпе ямаххансем (спецназовецсем) килĕшетчĕç. Мĕн пытарасси – халĕ те кăмăллатăп çар çыннисене тата МЧС ĕçченĕсене. Вĕсем йăрăс та патвар: чăн-чăн арçынсем! Арçын вара мĕн чухлĕ пысăктарах – çавăн чухлĕ лайăхрах. Тĕреклĕ те йăрăс, спортсмен пек кĕлеткеллĕ, ытарма çук илĕртӳллĕ пӳллĕ каччăн арçынлăх çӳпçинче тата мĕн пулмаллине списокпах кăтартас. Ун пек арçын кĕнеке нумай вуланă çын, вĕренӳре пысăк çитĕнӳсем тунă, унăн ырă кăмăлĕ анлă, кăмăл-сипечĕ ылтăн, сасси кĕмĕл, мăн кăмăллăх мĕнне пачах пĕлмест, хĕрарăмсене хисеплет, нимĕнле ĕçрен те хăрамасть.

Манăн чунăн ытарĕ те чĕнĕвĕ – вырăс каччисем! Пĕлместĕп – мĕншĕн, мĕн пĕчĕкрен вырăса çеç качча тухас килетчĕ. Чăваш арçыннипе çемьеллĕ пулассисе – пурнăçа кĕнĕ хăрушă тĕлĕк вырăнĕнчехчĕ маншăн. Чăваш йĕкĕчĕсенчен йĕрĕннĕрен мар çакă. Вырăс ачисем ытларах аталаннă, анлă курăмлăрах та хăюллăрах. Эпĕ ĕнтĕ вырăс мужланĕсем пирки каламастăп – сăмах йĕркеллĕ каччăсем пирки пырать.

Чăваш ялĕнче çитĕннĕ йĕкĕтсем, вырăс çамрăкĕсемпе танлаштарсан, кăнттамрах темелле – тӳрех куçа курăнать çакă. Воспитани, хăвна мĕнле тыткалани питĕ пĕлтерĕшлĕ. Тăван халăх каччисем вара, шел те, хĕрсене тивĕçтерекен шая ӳссе çитеймен. Хĕрсемпе çеç мар, пĕр-пĕринпе, çынпа калаçма пĕлни те кирлĕ, кăшкăрашмасăр, кăмăллăн пуплени питĕ кăтартуллă. Пикесен пурнăçĕнче хăлха питĕ пысăк вырăн йышăнать! Çӳçпе хупланнă, курăнмаççĕ пулсан та кашни хĕр-упраçăн хăлхисем чи чаплă та вĕр çĕнĕ радартан чаплăрах ĕçлеççĕ. Тӳрккес пирĕн чăваш каччисем. Çепĕç сăмах каласси вĕсемшĕн чĕр тамăк, чунран тухакан сăмахшăн ĕмĕр çылăха кĕрсе ӳкеççĕ тейĕн. Усал, киревсĕр сăмах персе ярасси вара нимĕн те мар – тĕлĕнмелле!

Хĕрсем çут тĕнчене чăн илем кӳнине те вĕçне çитиех ăнланса çитеймеççĕ чăваш каччисем. Йăванса вилсе кайăн та – чăваш халăхĕ юрату текен аслă туйăм çине урăхларах пăхать. Хĕрарăм, пурнăç нушине кура ĕнтĕ, чăваш халăхĕшĕн ача çуратакан чĕр савăт тата ăрата малалла тăсма пулăшакан ăру сăнчăрĕ çеç шутланнă. Çак курăм-пĕлтерĕшĕн ахрăмĕ менталитетра халĕ те туйăнать. Хуть те мĕн калăр, манăн шухăш пĕрре те тĕрĕс: чăваш каччисем пире – хĕрсене – вĕçне çити хакласа пĕтерейместĕç. Вырăссем вара ун пек мар: хĕр-упраç вĕсемшĕн пирĕшти те тур-пике! Çӳлти тӳперен çĕр çине аннă асам та илем! Ĕçрен ывăнса килсен сывлăш çавăрса илмелле çан-çурăма массаж туса илни мĕнле лайăх! Хăш вăхăтра çĕнĕрен çуралнăн туйса илетĕн хăвна. Вырăс упăшкана массаж тума ыйтсан вăл ним ӳркенмесĕр, чи кирли вара – сана ăнланса – çан-çурăмна йăваласа тухать. Чăваш ачишĕн арăмĕ çан-çурăмне массаж тума ыйтни – хăрушла сентиментализм. Мĕн каласшăн ку тĕслĕхпе? Пĕтĕмлетӳ пĕрре: чăваш каччисен культура шайĕ çителĕксĕртерех.

Хĕрарăм илемне сума суни, ăна пĕлĕте çĕклесе турăлатни çук тăван халăхăн. Хĕр-упраç сăнарĕ, унăн пурнăçĕ чăваш тĕнчинче ытла та тăварсăр. Авалхи грексем Чипер Еленăна упăшкине – Менелая таврса парас тесе тĕнче вăрçи пуçланă, Троя патĕнче 10 (!) çул тăнă. Çакнашкал хастарлăх чăваш халăхĕшĕн пачах ют. Хĕрарăм тесе чăваш арçыннисем тепĕр халăха хирĕç кар тăрса вăрçăпа тухас çук. Кĕтӳрен ĕне килне таврăнман пулсан, ялĕпе пуçтарăнса ĕне шырама кайма вара пултараççĕ вĕсем. Кăна ĕненетĕп.

Тепĕр япалана шута илмелле. Кашни арăм упăшки хыçĕнче чул хӳме хӳттинчи пек туясшăн хăйне. Пирĕн çĕр-шывра вара вырăс арçыннишĕн пур çĕре те çул уçă. Вĕсемпе пурăнма çăмăлтарах та хăтлăрах. Тăнăçлăх тапса тăрать вырăс каччисенчен. Манăн сăмахăм çакăн пек».

Çакнашкал шухăш-кăмăл, курăм тата ăнлав. Редакци шухăшласа кăларнă сăмахсем мар çаксем. Чăнлăх тĕкĕрĕн пĕр енĕ çакă. «Самантăн» респонден-

тне, чунне уҫнă хĕр пĕрчине часрах тытса пĕр тăхтамасăр кутăн ҫакас тесе кар тăма кирлĕ мар вулакансен. Чăваш хĕрĕсем вырăса качча тухасчĕ тени хальхи самана ҫуратнă кăмăл мар. Ҫăмламас мамонтсем пăрăх кăшкăртса Ҫавал хĕрне тапăра аннă вăхăтсенчех пулнă кунашкал шухăшлă чăваш пикисем. Вырăса качча тухни ҫын пулса тăмалли чи кĕске те тӳрĕ ҫул шутланнă мал ĕмĕтлĕ те мал курăмлă хĕр-упраҫшăн. Шухăша ҫирĕплетме Спиридон Михайлов этнограф 1857 ҫулта пичетленĕ «Чикме уесĕнчи Ишек сали» (Село Ишаки в Козьмодемьянском уезде) очеркĕнчен пĕр ĕҫ-пуҫа илсе кăтартар.

«Пирĕн хисеплĕ К.А. гражданин мана хваттерне хăнана чĕнчĕ; пĕр чăваш патĕнче, таса ампарта пурăнать иккен вăл. Ҫурт хуҫин арăмĕ, хура ҫӳҫлĕ ҫамрăк хĕрарăм, пирĕн пата пычĕ те каҫару ыйтса урай шăлма тытăнчĕ. «Ах! Извините, что у меня не совсем убрано», – терĕ вăл тап-таса вырăсла. Чăваш хĕрарăмĕ вырăсла лайăх калаҫнăран эпĕ тĕлĕнсех кайрăм. Ыйтса-тĕпчесе ҫакна пĕлтĕм вара.

Ҫак хура куҫлă вăр-вар чăваш хĕрарăмĕ хĕр чухне пĕр хушă вырăс купси патĕнче пурăннă, арманта апат пĕҫерекен пулнă. Пĕр-пĕр вырăс маттурне качча тухас тесе вырăс сараппанĕсем ятарласа тăхăнса ҫӳренĕ ҫавăн чухне. Анчах, инкеке темелле-и ĕнтĕ, ăна хура куҫ харшиллĕ маттур чăваш каччи ҫураҫнă та – хĕрарăм ҫавнах качча тухнă вара.

Туй чухне вырăс хуҫи хĕр-упраҫа чăваш кĕмĕл тумтирне парнеленĕ – шӳлекеме, хушпу тата темтепĕр. Вырăса качча кайса вырăс маткине тухас шухăша пăрахăҫланă вара ҫав хĕрарăм. Халĕ вăл чăвашла тăхăнса ҫӳрет, ҫапах та вырăс апат-ҫимĕҫне хатĕрлеме питĕ ăста. Кĕрпе ярса пĕҫернĕ пулă кукăлĕпе хăналарĕ вăл пире: ăна хаклă хăна – 3..в хуҫа – валли ятарласа хатĕрленĕ. Вăл хушнипех сăмавар та лартса ячĕ, чейпе сăйланă май чăваш чĕлхинче тĕл пулакан ҫивĕч сăмахсемпе тата кутăн-пуҫăн ăнлавсемпе усă курса манпа чылайччен шӳтлесе ларчĕ». Спиридон Михайлов, «Чикме уесĕнчи Ишек сали» (Хусан кĕпĕрни ведомоҫĕсем, 1857 ).

«Кама качча тухас?» – ыйтăва кăшт урăхлатса: «Ҫын пулас тесен кама качча тухмалла?» – тесе ыйтсанах хуравсем урăхларах килĕччĕҫ. Патша саманинчи «ют юн» (инородец) тенинчен, шел те, халĕ те хăтăлса ҫитеймерĕмĕр эпир. Пирĕн ҫĕр-шывра вак халăхсем 2-мĕш сорт этеммисем текен шухăш-курăм паян та пурах. Ҫавăнпа ĕнтĕ вак халăхсем пĕтсе пыраҫҫĕ. Вилсе пĕтсе ҫут тĕнчерен пач ҫухалмаҫҫĕ вĕсем. Ҫамрăксем тăван чĕлхерен писеҫҫĕ – ҫавă ҫеҫ. Тăван чĕлхен хальхи пурнăҫ экономикин тата чĕрĕлĕхĕн хевти ҫук.

Чăваш хĕрне пуяна качча тухни те чыс тăвать – ҫынна тухмалли тепĕр тӳрĕ ҫул ҫакă. Чăваш хĕрĕсене тăван халăх джигичĕсем пит килĕшсех каймаҫҫĕ ҫав – ҫакна ăнланмаллах. Пуласлăх пирки ҫĕрĕн-кунĕн пуҫ ҫĕмĕрекен хĕршĕн – юрату та хăйне евĕрлĕ социаллă пулăм. Хăв юратни мар, хăвна юратни кирлĕрех тесе шухăшлаҫҫĕ ҫирĕп ҫемье ҫавăрас шутлă хĕрсем.

Ҫапла вара, юрату текен туйăм ҫине чăваш каччисем ҫеҫ мар, чăваш хĕрĕсем те «интереслĕ» куҫпа пăхаҫҫĕ. Вĕсен ăнлавĕнче те авалхи курăмăн йĕрĕ сисĕнет. Атя шухăшлар-ха: пирĕн хĕр-упраҫсемшĕн чăваш каччи кам вăл?

**Роксана МИЛЮДА**




## *Ырлăх-сывлăх, телей-юрату сире, туссем-тăвансем!*

1236 ҫулта патшалăх тытăмне ҫухатнă тăван халăх 1920 ҫулта Чăваш автономи облаҫне, 1924 ҫулта Чăваш автономи социализмлă совет республикине туса хунă. Шел, паян Чăваш Республикин тĕнче умĕнче каллех патшалăх текен статус ҫук.

Чăваш автономи облаҫне туса хуни 75 ҫул ҫитнĕ чух, 1995 ҫулта, Чăваш патшалăх кунне официаллă уяв тесе саккунпах ҫирĕплетнĕ (2000 ҫулхи ҫу уйăхĕн 4-мĕшĕнчен – Республика кунĕ).

Республика кунĕн ҫĕнĕ мешехи – Шупашкар акатуйне ирттересси. Йăлаланнă тăрăх – республика кунне пĕр-пĕр районта уявлаҫҫĕ, ҫавăнпа ҫĕртмен 24-мĕшĕ – Шупашкар акатуйĕ валли чи меллĕ кун.

***Ырлăх-сывлăх, телей-юрату сире, туссем-тăвансем!***



# Çветтуйсем те çылăха кĕрсен...

***Пурин те тĕслĕх илмелли çемье (е çемьесем) кашни ялтах пур. Пирĕн – çылăхлă çынсен – «образцово-показательнăй» мăшăрсенчен вĕренмелле те вĕренмелле. Арăмĕсем вĕсен таçта та ĕлкĕреççĕ, ялан тĕрĕс сăмах калаçаççĕ, маттурлăхĕнчен çын тĕлĕнет. Упăшкисем арăмĕсене ахаль салтак генерала итленĕ пекех итлеççĕ, алă çинче йăтса çӳреççĕ, лешсем ирĕк памасăр пĕр грамм эрех сыпмаççĕ, трактор пек пĕр ывăнми ĕçлеççĕ. Тăван халăх мухтавĕ, чăваш ялĕн çветтуйĕсем тесех хакламалла вĕсене.***



Çут тĕнче 1980 çулсен ытамĕнче аталаннă тапхăрта ытарайми чăваш çĕр-шывĕн пĕр тăрăхĕнчи пĕр ялта çакнашкал çемье пĕрре çеç мар – иккĕ пулнă. Пĕр мăшăрĕ 50 патнеллех çывхарса пынă, тепĕр çемьери упăшкипе арăмĕ 30-сенче – 20 çул уйрăмлăх. Çулланнă мăшăрăн ачисем те ӳссе çитĕннĕ, хулара пурăннă. Çамрăк мăшăр вара икĕ пепке ӳстернĕ – ачисем шкула çӳренĕ. Туйсенче-уявсенче çамрăксене пил панă чухне яланах çак икĕ мăшăра тĕслĕх выранне илсе кăтартнă: «Çавсем пек пĕр çăварлă та чунлă пурăнăр!» – тесе ăс панă.

Ун чухне ял пурнăçĕ вĕресе тăнă. Урам тулли ача-пăча чупнă. Колхозсем тĕтĕм кăларса ĕçленĕ. Çапла вара, çăвăн хӳри чаплă кĕтӳçĕн хастар пушши пек çаврăнса шаплаттарса ыйăха путнă комбайнсене хире хăваласа кăларать. Ял пурнăçĕн чĕри йĕтем çинче тапма тытăнать. Аслă ӳсĕмри «образцово-показательнăй» çемьери упăшки зоотехник пулса ĕçленĕ, тĕслĕхлĕ кĕçĕн мăшăрăн арăмĕ – склад хуçи. Ун чухне колхозра выльăх-чĕрлĕх йышлă пулсан та сывлăх енчен аптраман пуль çав, зоотехник мĕн нушаран йĕтем тавра çаврăнса çӳренине ĕнесем сĕт нумай панипе, вĕсенчен пĕри те кăххăм-кăххăм ӳсĕрменнипе çеç ăнлантарма пулать. Йĕтем тулли ылтăн тĕш-тырă такамăн кăмăлне те хăпартать çав. Гималай тăвĕсем пек сăртланнă тырă куписем патĕнче вĕçсе тенĕ пек çӳрекен çамрăк хĕрарăм – склад хуçи – чăн-чăн пирĕшти пекех курăннă пуль çав поэт чунлă зоотехника. Пирĕштийĕ те тухăçлă тырă ыррин асамĕпе сĕрĕмленнĕрен зоотехника ĕмĕтри паттăр выранĕнех йышăннă. Ним çук çĕртен туслашса каяççĕ хайхисем. Вĕсен туслăхĕ – питĕ шел – нумая тăсăлмасть, бензин пек хыпса илсе тата çĕнĕ шая çĕкленет. Пĕр сăмахпа – юрату!

Çутă тунсăх юрăри пек ылтăн кĕркунне çитсе çаврăнать лăпкă чăваш тăрăхне. Телейлĕ юратакансемшĕн вара ĕмĕрхи çуркунне те сим пыл тĕлĕкĕ тытăнать. Çапла, туссем, ан иккĕленĕр: Чăвашра та çăтмах кĕтесне тупма пулать.

Юрату мĕнне тинех туйнă та пĕлнĕ çамрăк хĕрарăм тупăннă телейне арçыннăн саккунлă мăшăрĕпе çурмалла пайлама шухăшламасть. Питĕ хастар та пултаруллăскер тытать те зоотехник юлташа тепĕр района пĕрле илсе тухса тарать. Урăхла каласан – çĕнĕ упăшка тума вăрласа каять. Ачисем пурри çине те çаврăнса пăхмасть. Каснă-лартнă амазонка! Хăвăрах пĕлетĕр: амазонкăсем вара ытлашши чăнкă хĕрарăмсем. Ку та çăварлăхланă арçын каялла пĕр шит ан чактăр тесе унран ача çуратать.

Тепĕр 3-4 çултан склад хуçин малтанхи упăшки вăхăтсăр куçне хупать. Тахçан образцово-показательнăй арăм пулнă хĕрарăм унччен мăшăрне пытарма та пымасть. Зоотехникăн кивĕ (ватă) арăмĕ те упăшки каялла таврăнасса ĕненсе: «Киле кĕрсе тăрсан мĕн тумалла-ши ăна: каçармалла-ши е каялла хăваласа ямалла? Каçармаллах пуль...» – текен малаш плансем пирки кӳрши-маршипе калаçать. Шел каллех, стратегиллĕ плансем пурнăçа кĕреймен. Таврăнман зоотехник çил-тăвăллă тинĕс варринчи лăпкă утрав çине. Этемлĕх историйĕнче Чăваш Енри юлашки амазонкăна чунран паранна арçын пулса юлнă.

Çак юрату виç кĕтеслĕхĕнчен нуша куракансем – ашшĕ вилсен чĕрĕ амăшĕ пур çĕртех сĕм тăлăха тăрса юлнă икĕ ача. Аслăрах образцово-показательнăй çемьери ура çине тăнă ачисем хăй тĕллĕн пурăннăран ашшĕ çамрăк арăм тупса амăшне пăрахса хăварни пит пĕлтерĕшлех пулман тейĕпĕр. Тепĕр мăшăрăн вара ачисем шкулта кăна вĕреннĕ. Ашшĕ вилнĕ чух вĕсем 5-мĕш тата 7-мĕш класра пулнă. Хăйсене хăйсемех пăхса пурăннă икĕ ача. Ашшĕн те, амăшĕн те тăванĕсем пулăшса тăнине шута илсе вĕсене ятарлă интернат таврашне те яман. Асли шкул пĕтерсен хулана кайнă, аттестат илсен кĕçĕнни те унтах вырнаçнă. Ăçта пурăнаççĕ çак пĕртăвансем паянхи кун, чĕрех-и вĕсем – никам та пĕлмест. Яла килсе çӳремеççĕ, çурчĕ пушах тăрать.

Çав пӳрт патĕнчен иртсе çӳренĕ чух пĕр шухăш яланах канăç памасть. Хăй вăхăтĕнче ялти çветтуйсем выранне пулнă çамрăк мăшăр 1970 çулсем варринче çуртне хăпартнă. Вăл тапхăршăн вĕсен пӳрчĕ акăш-макăш пысăк. Ун чухне ялсенче кил-çурта ытла капмар лартман. Кусен вара – кермен! Апла мал ĕмĕтпе пурăннă образцово-показательнăй мăшăр, ачисем пирки, малашлăх çинчен шухăшланă. Юрату вара пурнăçа пач улăштарнă.

Чăвашсен юлашки амазонки вара пурнăçĕнче тата тепĕр юратупа тĕл пулнă. Иккĕмĕш упăшки ватăлса çитсе йӳтенĕ старик пулса тĕлĕнтерсе ĕлкĕреймест çамрăк арăмне – 60 урлă каçсан çул çинче тĕмĕнле автомобиль çапса хăварать ăна. Хĕлле, сивĕ – йăванса каять те çĕр каçа выртса шăнса вилет. Тăлăх арăм вара, 50 çывхарса пыраканскер, тепре качча тухать. Çĕнĕ упăшки вара хăйĕнчен те çамрăкки лекет. Аван, йĕркеллĕ пурăнаççĕ вĕсем. Зоотехникран çуратнă хĕрĕ качча тухнă, яла – ашшĕ-амăшĕ патне тăтăш пырса çӳрет.



*Ольга АВСТРИЙСКАЯ*

# ПĔРРЕМĔШ ТУЙĂМ

Паян ирпе нихçанхинчен савăк кăмăлпа вăранчĕ Настя. Мĕн сăлтавпа? Кăна хăй те пĕлмерĕ. Анчах тек куççуль юхтарас темерĕ вăл. Пачах тепĕр май, тăррăс-тăррăс! сикес, хавас юрă-кĕвĕпе ташлас, телейлĕ пулас килчĕ унăн. Ара, хăçантанпа хурланчăк çӳрет.

Макăрсах кун кунлатчĕ. Çĕрле вара куççульне ирĕке яратчĕ – чунĕ каниччен нĕшкетчĕ. Мĕншĕн? Хăйне шелленипе, шăпине ылханнипе, тантăшĕсене ăмсаннипе... Минтерĕ йĕп-йĕпех пулатчĕ. «Çамрăк-ха вăл хуйхă аллин ытамне лекме. Мĕн курасси – малашлăхра», – шахвăртĕччĕ ăна асăрханă пĕр-пĕр шур сухал. Анчах Настя никама та итлемĕччĕ. Чун йĕнĕ чухне ют çын лăплантарайĕ-и? Вăл йăпатма хăтланни пушшех те пăшăрхантарĕччĕ. Тарăхăвĕ вăйлăрах çеç йӳçе хăпарĕччĕ. «Эсир нимĕн те ăнланмастăр! Хăвăр çамрăк пулнине те тахçанах маннă. Сирĕн сĕнĕвĕрсен усси вуçех çук...» – хуравлĕччĕ вăл кӳренчĕклĕн.

...«Çын ĕмĕрĕ ытла та кĕске, савăнпа ăна йӳнĕ туйăмсемпе тултармалла мар, кăмăла пăсмалла мар! Араскалăмăр хуçисем – хамăрах. Эппин, паянтан çĕнĕ пурнăç пуçлатăп», – пĕтĕмлетрĕ Настя кравать çинчен ялт сиксе тăрса. Тутлăн карăнса чӳрече патне пычĕ, карăсене уçрĕ. Пӳлĕме хĕвел шевлисем ураланса кĕчĕç, çутăпа тултарчĕç. Япаласем çийĕн мĕлтлетрĕç, вырăнтан вырăна куçрĕç. Хĕре те ăшшăн çупăрларĕç вĕсем. Пайăркасем унăн шухăшне ырланăн туйăнчĕ Настьăна. Хĕвел те савать иккен ăна. Унччен çакна темшĕн ăнкарман-çке айванкка.

Тумланчĕ, апатланчĕ, кĕнеки-тетрадьне тепĕр хут тĕрĕслесе сумкине пуçтарса чикрĕ пике. Вара савăнăçлăн шкулалла тухса утрĕ. Тăван ялĕ те унчченхи пек тĕксĕм сăн-сăпатлă курăнмарĕ ăна паян. Ешĕл курăк, усăнакан туратлă капăр йăмрасем, çинçе шурă пилĕклĕ хурăнсем, кермен пек капмар та илемлĕ çуртсем, тăпăлкка хуралтăсем... Унччен епле асăрхаман-ха вăл чунне çывăх та хаклă çак тавралăха? Ăçта, мĕн çинче пулнă унăн куçĕ?

Э-э-э, пĕтĕм шухăшĕ те Костя пиркиччĕ-çке. Пĕр класра вĕренекен патвар йĕкĕтпе çеç кăсăкланатчĕ Настя. Шел, пĕр сĕтел хушшинче лармастчĕç вĕсем. Кун пирки ĕмĕтленме те пултарайман хĕр. Вĕренӳре уксахлать çав кăштах. Химие, физикăпа геометрие ниепле те парăнтараймасть. Формулăсемпе теоремăсем темшĕн пуçне вырнаçаймаççĕ. Вырнаçтарнипе кăна мар-çке-ха тата, усă курма пĕлмелле! Пули-пулми çĕрте çырса хураймăн. Çавăнпах теори материалне «пиллĕк» паллăлăх шакăртаттарса каласан та задачăсене ниепле те шĕкĕлчеймест Настя. Чĕрĕк вĕçĕнче яланах «виççĕ» кăларса параççĕ ăна вĕрентекенсем. Юрать-ха, алгебрипе «тăваттăлăх» шутлаять хуть.

Маттур каччă лайăх вĕренетчĕ, кашни олимпиадăна, конкурса хутшăнатчĕ. Чим-ха, мĕншĕн иртнĕ вăхăтра шухăшлать-ха ун пирки Настя? Халĕ те вĕренет, хутшăнать-çке-ха лешĕ. Спорт тупăшăвĕнче ăмăртмалла тăк – Костьăн ятне чи малтан асăнать физкультура учителĕ. Тепĕр тесессĕн, ăна ӳкĕтлеме те кирлĕ мар. Шкул чысне хӳтĕлеме яланах хатĕр вăл. Усă кăмăлĕпе тараватлăхĕшĕнех-тĕр ватти те, вĕтти те хисеплет, юратать ăна. Пĕчĕккисем хăпма пĕлмеççĕ аслăрах юлташĕнчен – е канаш, е пулăшу ыйтаççĕ. Никама та виçĕ хут тархаслаттармасть яш. Кашнин ыйтăвне вăхăтра тивĕçтерме тăрăшать. Тĕлĕнмелле, пур çĕре те ĕлкĕрет тата.

Пĕр класра ăс пухакан чиперуксен чĕрисем те Костьăшăнах çунаççĕ, ăна курсан хыттăнрах тапаççĕ. Паянхи кунччен Настя та çавсен йышĕнчехчĕ. Тĕрĕссипе, пикери палăрмалла улшăну ĕнерех пулса иртрĕ. Анчах ун чухне сиссе юлаймарĕ вăл çакна. Чунĕ ĕсĕклерĕ, «çăвăнса тасалчĕ», ыррине йышăнма хатĕрленчĕ. Эрне каялла кăна Настьăна пĕр-пĕр асамçă çакăн пирки систернĕччĕ тĕк – ĕненмĕччĕ. Хăвалĕччĕ унашкал шухăшсен эшкерне. «Костьăсăр пурăнма пулать-и вара. Вăл – тĕнчери чи лайăх каччă», – тейĕччĕ çирĕппĕн те татăклăн. Çакна çĕр çын хирĕçлесессĕн те вĕсемпе килĕшмĕччĕ. «Чĕлхе шăмăсăр, тĕллев тытсан темĕн те сӳпĕлтетме, чипер çынна та хăрăмпа варалама пулать. Тиркевлĕрех сăнасассăн хĕвел çинче те хура пăнчă тупăнать», – çиелтен хушса хурĕччĕ хĕр. Çитменнине, хăй тĕрĕслĕхĕнче чĕптĕм чухлĕ те иккĕленмĕччĕ.

Шел, тен, телее, чăнлăхра кунашкал калаçу пулса иртмерĕ. Ĕмĕчĕсемпе ăнтăлăвне ют куçран тăрăшуллă пытарчĕ Настя. Вăл Костьăна савнине никам та, нимĕн те пĕлмерĕ. Кун кĕнекине шута илмесессĕн паллах. Хытă хуплашкаллă хулăн тетрадь мĕн пур вăрттăнлăха упрарĕ. Хăй чĕмсĕр пулнипе вĕсене никама та уçса параймĕччĕ. Хăтланса пăхсассăн та ĕçе вĕçне çитерме кăткăс килĕччĕ. Ара, ăна çăрапах питĕрнĕ вĕт-ха. Уççийĕ – хуçинче кăна, ăна вара тĕплĕн пытарнă.



Настьăн шухăшне урăх çул-йĕрпе мĕн чуптарчĕ-ха? Мĕн сивĕтрĕ ăна Костьăран? Хĕрĕн куçĕ умне ĕнерхи ӳкерчĕк шуса тухрĕ.

...Шкул апатланмăшĕн стени çине «Когда я ем, я глух и нем» тесе çырнă пулин те, ку правилăна никам та пăхăнмасть, плаката никам та асăрхамасть. Чăнкăл-чăнкăл сасă тăрать столовăйĕнче. Хушăран тĕпĕр-тĕпĕр чупса иртет хăш-пĕр вĕренекен. Шăпăрланĕсем те, аслăраххисем те черетре маларах тăрасшăн-çке. Яшки-пăтти, пылак çимĕçĕ пурне те çитмĕ тейĕн.

Анчах темшĕн вуннăмĕш класри йĕкĕтсем апатланма васкамарĕç. Пĕр кĕтессе пухăнса тăнă та хĕрсех тем сӳтсе яваççĕ, пăшăлтатаççĕ, хĕрсем пек хихиклетеççĕ. Ытти классем çакăн сăлтавне пĕлесшĕн пулчĕç. Кармашрĕç, хăлхисене чанк тăратрĕç. Хăюллăраххисем çывхарма, вăрттăн итлеме те хăтланчĕç. Каллех ĕç тухмарĕ. Яхăнне те ямарĕç вуннăмĕшсем. Çапах та Настя Костя аллинчи хут листине асăрхаса ĕлкĕрчĕ. Каччăн аллинчен пĕрин патне те теприн патне куçрĕ вăл. «Мĕн çырнă-ши унта?» – пĕлес килни хĕре те канăçсăрлантарчĕ. Яшсем хут листин содержанийĕпе паллашнă май хыттăнрах ахăлтатрĕç. Тахçанччен тăратчĕç ĕнтĕ вĕсем, Нюра инке повар ятлани çеç саланма хистерĕ.

– Мĕн шапасем пек ахăрашатăр? Хăвăр ăçтине мантăр-им? Капла янрашсан пурне те хăваласа кăларăп, выçă юлатăр ак! – терĕ хĕрарăм хулăн саспа.

Туххăмрах шăпланчĕç йĕкĕтсем. Анчах столовăйне Лина кĕрсессĕн ахăрсамана пуçланчĕ тейĕн. Вуннăмĕшсем улатма, çухăрашма, ахăлтатса кулма пикенчĕç – паçăрхинчен те вăйлăрах. Настя та, ытти вĕренекен те нимĕн те ăнланмарĕ. Тĕлĕннипе чăл-чал çеç пăхкаларĕ хĕр.

Лина та çухалса кайрĕ курăнать. Пичĕ пĕрре шуралчĕ, тепре хĕрелчĕ, тути вĕттĕн чĕтрерĕ. Тантăшне каччăсем сырса илчĕç, пуринчен мала, пуçне мăн кăмăллăн каçăртса, Костя тухса тăчĕ.

– Юрату çырăвĕсем çыратăн-ха эс, вĕсене кам патне ăсатмаллине чухлаймастăн пулас. Юратăва тивĕç пулмалла, эс хăвăн çине пăхса ил-ха! Ман пата мар, Çĕтĕк Гришук патне çырмаллаччĕ. Вăт унпа кăмăллă мăшăр пулатăр эсир, – терĕ шăл витĕр сăрăхтарса, чеен кулса. Сăн-питĕнче йĕрĕнчĕклĕх, каппайчăклăх сăнарланнă... Трон çинчи патша пекех тытрĕ хăйне Костя. Юлташĕсем ун майлă çаптарни ăна хĕтĕртсе тăчĕ курăнать. Лина хирĕç нимĕн те чĕнеймерĕ, макăрса ячĕ те апатланмăшран тухса вирхĕнчĕ.

Шкул «çăлтăрĕн» монологне чылайăшĕ илтрĕ. Хăшĕ-пĕри ун тыткаларăшне хурларĕ, çапах та ырлакансем ытларах пулни хытах тĕлĕнтерчĕ Настьăна. Илемлĕ маска хыçĕнче Костьăн чăн сăн-сăпатне асăрхарĕ вăл. Пăхма хитре пан улми хуртлă пулчĕ иккен. Маттур яш чĕлтĕрти лĕпĕш çуначĕ пек, кĕрхи пĕрремĕш çӳхе пăр пек черченкĕ туйăма çапла сĕмсĕрле таптама пултарасси хăрушă тĕлĕкре те курăнман пикене.

«Мĕскер хăтланатăр эсир? Çынна тумне кура хакламалла мар-çке! Лина пек ырă кăмăллă хĕре тупаятăр-и-ха тек?» – тесе кăшкăрас килчĕ Настьăн пурте илтмелле. Çемйи чухăн, ашшĕ ĕçет, амăшĕ виçĕ хĕрне ура çине тăратас тесе виçĕ ĕçре тар тăкать, укçи-тенки пурпĕр çитсе пымасть. Анчах çакăнта Линăн айăпĕ пурши? Мĕншĕн сивлемелле, çапла хăртмалла ăна?

Настьăн «юратăвĕ» туххăмрах таçта сĕвĕрĕлчĕ. Хăйне Лина вырăнне лартса пăхрĕ вăл. Çапла килсе тухма та пултарнă вĕт-ха. Ара, юлашки вăхăтра шăпах çыру шăрçаласси, чĕринчи вăрттăнлăхне уçса парасси пирки шухăшлатчĕ-çке хĕр. Пирĕштийĕ упраса хăварчĕ-тĕр ăна ку утăмран. Линăн, авă, туйăмсен йӳççине ас тивме тиврĕ...

Аса илӳ çиппине Маринăн сасси татрĕ.

– Настя, тетĕп! Кĕт-ха мана! Виççĕмĕш хут чĕнетĕп сана. Урам варринче хурахлатса кăшкăрманни кăна юлчĕ ĕнтĕ. Мĕн пирки тарăн шухăша путнă эсĕ? – пăтăр-патăр сăмахларĕ хĕр упраç.

– Ĕнерхи пулăм пуçран тухмасть-ха, – терĕ Настя кĕскен.

– Ан та кала-ха, кун пеккине кĕтменччĕ эпĕ Костьăран. Чунне кĕрĕк çанни пекех тавăрса кăтартрĕ пирĕн маттур принц! – шухăшне пытармарĕ Марина.

* * *

Вăл кун Лина уроксене пымарĕ, тепĕр эрнерен те курăнмарĕ шкулта. Килĕнчен те тухма вăтанчĕ пике. Вуннăмĕшсем сăлтавне аван пĕлчĕç. Темшĕн чи çывăх тусĕсем те Костьăран майĕпен ютшăнма пуçларĕç. Пулăшу, сĕнӳ ыйтакан сайраланчĕ. Класс ертӳçи столовăйĕнчи ĕç-пуç пирки сăмах тапратсассăн вара ăна хӳтĕлекен те тупăнмарĕ. Пурпĕр хăйĕн айăпне йышăнмарĕ пуçтах каччă.

Лина... Учительсемпе тантăшĕсем тем пек ӳкĕтлесессĕн те тăван ялĕнчи шкула таврăнмарĕ вăл, район центрне çул тытрĕ. Мĕнешкел ăш пиллĕ çынна, сар хĕвеле çухатнине халь тин ăнланса илчĕç пурте. Яланлăхах мар пулин те... Вĕсен класне ура ярса та пусмĕ Лина. Çук, çилĕ тытса пурăнмасть вăл. Тахçанах каçарнă хăйне кӳрентернĕ яшсене. Çапах иртнине таврăнас, хăйне пăлхатас темест. Чĕре суранĕсене вара вăхăт сиплĕ... Вăл – чи паха эмел. Настьăна та вăлах вĕренӳри йывăрлăхсене парăнтарма (юлашки чĕреке лайăх паллăсемпе вĕçлерĕ хĕр), юрату тесе йышăннă пĕрремĕш ултавлă туйăмран хăпма пулăшрĕ, пурнăçра суйлавлăрах, тимлĕрех пулма вĕрентрĕ.

# Çырăнтару, туссем, çырăнтару!



Вут чĕреллĕ Çеçпĕл Мишшине аса илер-ха,
мĕн калана пулĕччĕ вăл пире?

*«Самантлă», журналлă пулăр*
*Хастар чăваш ачисем!*
*Вут кайăклăн вĕçĕр – ан манăр:*
*Эсир – «Самант» тусĕсем!*

| Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕсем | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Почта уйрăмĕсенче | | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| | акци вăхăтĕнче | акци хыççăн | | | |
| ***Тантăш*** | 271-44 | 289-44 | 132 | 132 | 90 |
| ***Самант*** | 157-02 | 181-02 | 156 | 156 | 120 |
| ***Тетте*** | 125-52 | 143-52 | 111 | 111 | 90 |

## *Иртнĕ номерте пичетленнĕ, Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ сăмах касмăш хуравĕсем*

***Сылтăмалла:*** 3. Минерал – апатит. 7. Арçын ячĕ – Осип. 10. Театрти ушкăн – труппа. 11. Азири çĕр-шыв – Инди. 12. Армении ту – Арарат. 13. Бурятсен хресченĕ – арат. 15. Акуна-матата. 18. Континент – Африка. 19. Сирпĕтмелли хатĕр – тар. 20. Вăл патриарх пулнă – Никон. 23. Уçăлса çӳремелли вырăн – парк. 24. Египет çынни – араб. 25. Яшкари турам – салма. 28. Ĕлĕкхи турккăсен Осман патши. 30. Финляндири кӳлĕ – Инари. 31. Авалхи римлянсен укçи – асс. 33. Çавранса ӳкнĕ пăр катăкĕ – ропак. 34. Сурăхсен «вити» – кошара. 37. Африкăри çĕр-шыв – Того. 38. Трактор пайĕ – трак. 39. Çар техники – пушка. 42. Вырăс юрăçи, хĕрарăм – Натали. 46. Пулă – уланкă. 48. Стена çинчи агитка – плакат. 49. Çулçăсем ӳкнĕ вăхăт – кĕр. 50. Нухрат – укçа. 51. Инди писателĕ – Тагор. 53. Йĕлтĕр йĕрĕ – трасса. 57. Банкет евĕрскер – суаре. 59. Пулă тытмалли хатĕр – шак. 61. Вăл пулăçа кирлĕ – атма. 63. Çава хăйри – лапатка. 67. Ял пайĕ – урам. 68. Вăл ĕнсе хыçĕнче çӳрет – инкек. 69. Хĕрарăмсен журналĕ – «Она». 70. Актриса – Инна Чурикова. 71. Ĕлĕкхи çар çынни – ратник. 72. Панулми сорчĕ – анис. 73. Арçын ячĕ – Акаки. 74. Талăк пайĕ – кас.

***Аялалла:*** 1. Мирлĕ атом 2. Чăваш апачĕ – тултармăш. 3. Унран аслă пулма хушман – апат. 4. Амазонка юппи – Парана. 5. Хваттерти хурт-кăпшанкă – таракан. 6. Хими элеменчĕ – титан. 7. Офелия, Одетта, Одарка 8. Унăн тĕп хули – Дамаск: Сири. 9. Мăлатук умĕнче пуç таякан – пăта. 14. Хĕр-тус – акам. 16. «Любэ» ушкăнăн хичĕ – «Атас». 17. Архитектура элеменчĕ – арка. 21. Чечек – ирис. 22. Хăма – обабок. 23. Çар ушкăнĕ – полк. 25. Пылак шĕвек – сироп. 26. Хурт-кăпшанкă – лĕпĕш. 27. Гана çĕр-шывĕн тĕп хули – Аккра. 29. Хĕрлĕ тĕс – нар. 32. Пустав – сатин. 35. Мухтаса çырнă сăвă – ода. 36. Типсе пыракан тинĕс – Арал. 37. Кун тăршшĕ – талăк. 40. Ăна лаша сĕтĕрет – урапа. 41. Вĕренӳ пӳлĕмĕ – класс. 42. Çурт тĕрекĕ – никĕс. 43. Ут-урапа тавраш – турта. 44. Антрекот, бефстроганов, лантет 45. Минерал – шпат. 47. Çыпăçакан курăк – куршанак. 52. Мушкетерсенчен пĕри – Арамис. 54. Кĕвĕ-ташă стилĕ – рэп. 55. Казаксен офицерĕ – сотник. 56. Пысăк попугай – ара. 58. Сĕт-çу «тăванĕ» – уйран. 60. Офис ĕçченĕ – клерк. 62. Снаряд – мина. 64. Япони техники – акаи. 65. Телефон номерне тупса палăртакан хатĕр – АОН. 66. Бразили футболисчĕ – Кака.


© САМАНТ

Аслă классенче вĕренекенсемпе çамрăксен журналĕ

*ИНДЕКС*
*73208 (республикăра)*
*11467 (республика тулашĕнче)*

1929-1991 çулсенче «Хатĕр пул!», 2003 çулччен «Çилçунат» ятсемпе тухнă

6 (669) № 2014 ç.

*УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:*
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăлă коммуникацисен министерстви

**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăлă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çуртĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.**

Директор-тĕп редактор - **А. ЛЕОНТЬЕВ.**

Яваплă редактор - **В. СТЕПАНОВ.**

Компьютер дизайнĕ - **И. МИЛОВИДОВА.**

Пирĕн сайт: **www.hypar.ru**

Электрон адрес: **tantas@list.ru**

Пирĕн адрес: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев пр.,13, Пичет çуртĕ, «Хыпар» Издательство çуртĕ

Телефонсем:
**56-00-67**
**28-83-89**

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăлă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕ (Роскомнадзор) 2013 çулхи раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00310 № регистрациленĕ.

Хакĕ ирĕклĕ.

Журнала редакцире калăпланă, «Чувашия» ИПК» ПУП (И. Яковлев пр.,13) пичетленĕ.

Пичете алă пуснă: 18.06.14.
Пичетленĕ: 26.06.14.

Хут формачĕ 60х84 1\8
Усл. п. л. 2,83.
Тираж 1592 экз.
Заказ № 1099






**Диана МАНИНА**

*Кролик ҫулӗнче ҫуралнӑ, гороскоппа – Тараса. Ташлама ӑста, футболла выляма питӗ юратать. Дианӑшӑн ҫут тӗнче илемӗ – чӗр чунсем. Вӗсенчен чи лайӑххисем йытӑсем. Пурнӑҫра тӗслӗх илмелли сӑнар – Мцыри (М.Лермонтов поэмин геройӗ). Ырӑ кӑмӑллӑх, тӳрӗ чунлӑх, туслӑх – пурнӑҫра чи кирли.*






**Вера УСТИНОВА**

*Гороскоппа – Йӗкӗреш, Кролик ҫулӗнче ҫуралнӑ. Спорт вӑййисенче пултаруллӑ. Сарӑ тӗслӗ тӗнче килӗшет «Самант» пикине. Ҫеҫкесенчен кӑвак кӗл чечеке уйӑрать. Юратнӑ кӗнеке – «Ылтӑн вӑчӑра». Чӑваш юрӑҫисенчен «Юхха» фильмра тӗп роль вылянӑ Ольга Осиповӑна кӑмӑллать.*